ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Ноябрь 1 ВЫРСАРНИКУН № 214 (9128) Хакӗ 20 пус. 36-мӗш ҫул тухать.

Апат-ҫимӗҫ туса кӑларакан промышленность работникӗсем! Апат-ҫимӗҫсем туса кӑларассине пур майсемпе те сарса пырӑр, вӗсен пахалӑхне лайӑхлатӑр! Хамӑр ҫӗршыври халӑх валли аш-какайпа пулӑ продукчӗсем, ҫу, сахӑр тата ытти апат-ҫимӗҫ таварӗсем нумайрах туса кӑларар!

(КПСС Центральнӑй Комитечӗ Октябрьти Социализмла Аслӑ революци 36 ҫул тултарнӑ ятпа чӗнсе каланисенчен).

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитетӗнче

Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫакна палӑртаҫҫӗ: юлашки ҫулсенче апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларасси чылай ӳсрӗ. СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе апат-ҫимӗҫӗн тӗп таварӗсене туса кӑларасси, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 1953 ҫулта ҫакӑн чухлӗ пулать:

аш-какай—162 процент
пулӑ (тытасси)—172 процент
колбаса таврашӗсем — 158 процент
выльӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ—2 хута яхӑн ытларах
сыр — 2 хут ытларах
ӳсентӑран ҫӑвӗ—153 процент
маргарин—3 хута яхӑн ытларах
сахӑр—168 процент
консервӑсем—2,5 хут ытларах
кондитер таварӗсем—172 процент
макаронсем—2,2 хут ытларах
хӗрпе—124 процент
сӑра—152 процент
виноград эрехӗ 184 процент.

1953 ҫулта апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларасси, 1952 ҫулхипе танлаштарсан, 41 процент ытларах ӳсет. 1953 ҫулхи пӗррелӗш ҫур ҫулта государство промышленноҫӗ апат-ҫимӗҫ таварӗсем 1952 ҫулхи пӗррелӗш ҫур ҫултинчен 9,7 процент ытларах туса кӑларнӑ. Анчах та питех те кирлӗ чылай апат-ҫимӗҫ таварӗсем: аш-какай, выльӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ, сӗт продукчӗсем, кондитер таварӗсем тата ытти хӑшпӗр таварсем туса кӑларасси 1953 ҫулхи пӗррелӗш ҫур ҫулта, 1952 ҫулхи пӗррелӗш ҫур ҫултипе танлаштарсан, нумаях ӳсмен, пулӑ тытасси вара кӑштах чакнӑ та. Ҫакна май ку таварсем тӗлӗшпе халӑхӑн ӳснӗ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерейменсӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: туса кӑларакан апат-ҫимӗҫ таварӗсен хисепӗ тата апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларас ӗҫ ӳсӗмӗн хӑвӑртлӑхӗсем халӗхи вӑхӑтра совет халӑхӗн пурнӑҫӗн материальнӑй тата культурӑллӑ шайне хӑвӑртрах ӳстерес задачӑна пурнӑҫлама тивӗҫтерейменсӗ.

Йывӑр промышленноҫа аталантарас, ялхуҫалӑхне аталантарас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем тата ялхуҫалӑхне малалла вӑйлатмалли мероприятисем апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине хӑвӑрт вӑйлатмашкӑн чӗртаварсен ҫирӗп никӗсне туса хума май параҫҫӗ.

Халех пурнӑҫа кӗртмелли задача ҫакӑ пулать: ҫитес ик-виҫӗ ҫул хушшинче халӑха аш-какайпа аш-какай продукчӗсем, пулӑпа пулӑ продукчӗсем, ҫу, сахӑр, кондитер таварӗсем, консервӑсем тата ытти продуктсем парса тӑрассине татӑклӑнах ӳстермелле.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсен пахалӑхӗ юлашки ҫулсенче ӳснӗ тата таварсен ассортименчӗ чылай пысӑкланнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех промышленноҫӑн апат-ҫимӗҫ отраслӗсен чылай предприятийӗсем халӗ те пахалӑх енчен, уйрӑмах тутӑ енчен, тавар илекен совет ҫыннисен требованийӗсене тивӗҫтермен продукци туса кӑлараҫҫӗ.

Аш-какай промышленноҫӗ мӗнпур аш-какайран ⅓ пайне — самӑрлатман ӗне ашӗ кӑларать. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхӗн тӗп сӑлтавӗсенчен пӗри вӑл—хатӗрлев енӗпе тӑратакан выльӑх-чӗрлӗх ырхан пулни. Выльӑх-чӗрлӗхе самӑртас ӗҫе туса пыма тивӗҫлӗ организацисем ҫак ӗҫе ҫителӗксӗр пурнӑҫлаҫҫӗ тата ҫак тӗллевпе апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн каяшӗсемпе ялӑх усӑ кураҫҫӗ.

Хаклӑ йышши пулӑсенчен пысӑк пахалӑхлӑ шӑнтнӑ, сахал тӑварланӑ тата копченӑй пулӑ таварӗсем туса кӑларас вырӑнне, вӗсене нумайӑшне халӗ те ялан чухнехи пек тӑварлама кӑна яраҫҫӗ. Нумай тытакан вӗтӗ пулӑсемпе (килька, салака, хамса, тюлька) пулӑ таварӗсен лайӑхлатнӑ ассортиментне—консервӑсем, паштетсем, шӑнтнӑ тата копченӑй пулӑ таварӗсем туса кӑларма пачах ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ.

Сӑкӑр пӗҫерекен промышленноҫӑн предприятийӗсенче ҫӑкӑра тачка, пахалӑх енӗпе нормӑсенчен чакса, санитари требованийӗсене пӑхӑнмасӑр пӗҫернисем пулкалаҫҫӗ.

Туса кӑларакан маргаринӑн пысӑкрах пайӗ тутӑ енчен тата шӑрши енчен ҫителӗклӗ вырӑнта тӑмасть.

Республикӑсенчи тата вырӑнти промышленноҫӑн предприятийӗсем туса кӑларакан апат-ҫимӗҫ таварӗсем, производство культури ҫителӗксӗр тата техникӑлла никӗс вӑйсӑр пулнӑ пирки, ялан тенӗ пекех, пахалӑх енчен Союз промышленноҫӗн продукцийӗнчен каярах тӑраҫҫӗ. Союз промышленноҫӗн малта пыракан, пысӑк пахалӑхлӑ апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларакан предприятийӗсен опычӗпе республикӑсем тата вырӑнти [illegible] пахӑшне [illegible] ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ.

Промышленноҫӑн апат-ҫимӗҫ отраслӗсен ӗҫӗнчи тӗп ҫитменлӗхӗсенчен пӗри—виҫҫе хатӗрленӗ, лайӑх та илемлӗн чӗркенӗ апат-ҫимӗҫ таварӗсем сахал туса кӑларни пулать. Ҫавӑн пек таварсене халӑх ытларах ыйтать.

Малтанах виҫҫе чӗркенӗ, усӑ курма хатӗрлесе ҫитерни тата пӗҫерме хатӗрленӗ апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларни продуктсен пахалӑхне сыхласа хӑварма пулӑшать, кунсӑр пуҫне тата килти хуҫалӑхра апат-ҫимӗҫ хатӗрленӗ чухне нумай ӗҫ тӑвассинчен хӑтӑлма май парать, ҫавӑн пекех суту-илӳ культурине ӳстерет тата тавар илекенсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессине лайӑхлатать.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсене виҫҫе хатӗрлесе тата илемлӗ чӗркесе кӑларассине ӳстерме вӑрман, хут, металлурги тата ҫӑмӑл промышленность предприятийӗсем апат-ҫимӗҫ предприятийӗсене тара, ятарласа тӑвакан сортлӑ хут, пергамент, картон, фольга тата целлофан ҫителӗксӗр парса тӑни пысӑк чӑрмав кӳрет. Парса тӑракан хутша картонӑн пахалӑхӗ апат-ҫимӗҫ таварӗсене машинӑпа чӗркес ӗҫӗн требованийӗсене пӗтӗмӗшпех тивӗҫтерейменсӗ.

СССР Вӑрман тата хут промышленность министерстви йывӑҫ тара, уйрӑмах пулӑ тӑварламалли пичкесем, туса кӑларассине ӳстерме, вӗсен пахалӑхне лайӑхлатма тата хӑйне ларакан хакне йӳнетме техникӑлла никӗсе вӑйлатасси ҫине кирлӗ пек пӑхмасть. Ҫакӑ вӑл апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине аталантарма кансӗрлет, таварсене сыхласа усрас тата турттарас ӗҫре ҫӗнӗ йывӑрлӑхсем туса хурать. Апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ туса кӑларакан апат-ҫимӗҫ таварӗсен пахалӑхӗ час-часах турттарнӑ чухне, ятарласа тунӑ чугун ҫул, автомобиль тата шыв транспорчӗ, уйрӑмах рефрижераторнӑй транспорт ҫитменнипе пула, чакать.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленноҫне техникӑпа пуянлатма кучухнехи оборудовани туса кӑларасси япӑх сарӑлнӑ.

Ялхуҫалӑх чӗртаварӗсенчен апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларас тӗлӗшпе ӗҫлекен чылай предприятисен хӑвачӗ ҫителӗксӗр. Уйрӑмах вылькӑх-чӗрлӗхе пусса аш-какай продукчӗсем туса хатӗрлес енӗпе Сурҫӗр Кавказри, Донбасри тата Уралти районсенче, сӗтрен продуктсем туса хатӗрлес тӗлӗшпе Украина ССР-ӗнче тата РСФСР-ӑн центрти чылай облаҫӗсенче, сахӑр кӑшманӗнчен сахӑр тӑвас енӗпе Молдаван ССР-ӗнче тата Украина ССР-ӗн хӗвеланӑҫӗнчи облаҫӗсенче, ҫӗр мамӑк вӑрринчен ҫу кӑларас енӗпе Вӑтам Азири районсенче тата соя пӑрҫинчен продуктсем туса кӑларас енӗпе Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче предприятисен хӑвачӗсем ҫителӗксӗр. Ҫакна пула ҫӗр мамӑк вӑррипе соя пӑрҫине усӑсӑр инҫене турттарса ҫӳреме тивет.

Уралта, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче, Ҫӗпӗрте тата Вӑтам Азире апат-ҫимӗҫ предприятийӗсем тӑвас ӗҫ, тӗпрен илсен, кондитер таварӗсем, макарон, колбаса, сӑра тата улма-ҫырла шывӗ туса кӑларакан предприятисем лартас ӗҫ ҫав районсенчи промышленность центрӗсен ӳсӗмӗнчен юлса пырать.

Апат-ҫимӗҫ предприятийӗсен капитальнӑй строительствине ертсе пырас ӗҫре организаци тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫитменлӗхсем пулнипе пӗрлех, ку ӗҫ юлса пыни стройкӑсене строительство материалӗсем ҫителӗклӗ парса тӑманнинчен тата строительство ӗҫӗсене ҫителӗксӗр механизацилениннчен килет. Апат-ҫимӗҫ предприятийӗсем тунӑ ҫӗре строительство ӗҫӗ енӗпе шкулсенчен вӗренсе тухакан инженерсемпе техниксене сахал яраҫҫӗ.

Хӑшпӗр министерствӑсемпе ведомствӑсем, ҫавӑн пекех союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем, пысӑк мар апат-ҫимӗҫ предприятийӗсем (пекарньӑсем, ҫӑкӑр завочӗсем, сӗт продукчӗсем, сӑрапа тутлӑ шыв туса кӑларакан предприятисем тата ыттисем те) тума кирлӗ районсенче, вӗсен строительство организацийӗсем пур пулин те, ҫав предприятисене тӑвас ӗҫе хӑйсем ҫине илмеҫҫӗ. Ҫавна пула ытлашши пӗчӗк, юнашар ӗҫлекен строительство организацийӗсем тӑваҫҫӗ, усӑсӑр тӑкаксем пулаҫҫӗ, строительство срокӗсем вӑрӑмланаҫҫӗ.

Промысла тата потребительсен кооперацийӗ, вырӑнти промышленность государствӑн апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ ҫителӗксӗр аталаннӑ районсенче апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларас ӗҫе питех те ҫителӗксӗр аталантараҫҫӗ. Ҫавӑн пирки ку таварсене урӑх районсенчен кӳрсе пыраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсене вырӑнтах, сахалтарах укҫа-тенкӗ пӗтерсе, инҫете турттарса ҫӳремесӗрех туса кӑларма пулать.

Вырӑнти чӗртавартан—вӑрманта ӳсекен улма-ҫырласенчен, ҫырласенчен, кӑмпасенчен, ҫавӑн пекех пахча ҫимӗҫсенчен ытти чӗртавартан апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларма пысӑк майсем пур пулин те, промысла тата потребительсен кооперацийӗ, районти промышленность вырӑнти чӗртавартан апат-ҫимӗҫ туса кӑларакан предприятисене сахал пысӑклатаҫҫӗ тата ҫӗнӗ предприятисем ҫителӗксӗр организацилеҫҫӗ.

Облисполкомсем, крайисполкомсем тата республикӑсен Министрӗсен Совечӗсем вырӑнти промышленноҫӑн, промысла тата потребительсен кооперацийӗн апат-ҫимӗҫ предприятийӗсене аталантарасси ҫине кирлӗ пек тимлӗ пӑхмаҫҫӗ.

Промышленноҫӑн апат-ҫимӗҫ отраслӗсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсенчен пӗри вӑл—чӗртаварпа хатӗр продукци сая кайнине чакарассишӗн, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн тивӗҫлипе кӗрешменни пулать. Чӗртаварпа хатӗр продукци усӑсӑр пӗтнине чакарассишӗн, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетессишӗн кӗрешни халӑха кирлӗ таварсен ваккӑн сутмалли хакӗсене малалла йӳнетмелли тӗп ҫӑлкуҫ пулса тӑрать.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстерес, вӗсен пахалӑхӗпе ассортиментне лайӑхлатас ӗҫе хӑвӑрт вӑйлатас шутпа, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ ҫапла йышӑннӑ:

I.

Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстерессси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен

1. 1954—1956 ҫулсенче апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине татӑклӑнах ӳстермелле, вӗсен пахалӑхне, ассортиментне, малтанах виҫҫе хатӗрлесе тата чӗркесе хурассине лайӑхлатмалла, пилӗк ҫуллӑх планпа апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларма 1955 ҫул валли палӑртнӑ заданине чылай малтан тултармалла. Ҫак шутпа палӑрах апат-ҫимӗҫ продукчӗсем туса кӑларассине ҫакӑн пек ӳстерсе пыма палӑртас:

Аш-какай тата аш-какай продукчӗсем енӗпе

2. Аш-какай, колбаса таврашсем, аш-какай консервисем, котлетсем тата ытти аш-какай продукчӗсем туса кӑларассине чылай ӳстермелле тата вӗсене туса кӑларассине ҫак виҫене ҫитермелле:

	Виҫе ячӗ	1954 ҫул	1955 ҫул	1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
Аш-какай	пин тонна	2.180	2.550	174	2 хут
Вӑл шутран:					
Кайӑк-кӗшӗк аш-какайӗ	»	75	105	2,5 хут	3,5 хут
Колбаса таврашсем	»	710	850	147	176
Вӑл шутран:					
Сосискӑсемпе сарделькисем	»	90	135	2,1 хут	3,1 хут
Аш-какай консервисем	миллион банка	380	480	147	186
Котлетсем	миллион штук	1.300	1.600	4,9 хут	6 хут
Аш-какайран хатӗрленӗ Ҫурма фабрикатсем	миллион порци	110	165	3,8 хут	5,7 хут
Пельменьсем	пин тонна	50	70	6 хут	8,7 хут
Виҫҫе хатӗрленӗ аш-какай	»	30	70	26 хут	Темиҫе вуншар хут

1956 ҫулта государство промышленноҫӗ аш-какай туса кӑларассине 3 миллион тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,4 хут ӳстермелле, колбаса таврашсем туса кӑларассине 1 миллион тонна тарана ҫитермелле е, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,2 хут, ӳстермелле, кайӑк-кӗшӗк аш-какайӗ туса кӑларассине 1950 ҫулхипе танлаштарсан 4,7 хут ӳстермелле.

3. 1953 ҫулхипе танлаштарсан, ҫак апат-ҫимӗҫ таварӗсене туса кӑларассине ҫакӑн чухлӗ ӳстермелле:

виҫҫе хатӗрленӗ аш-какай туса кӑларассине 1954 ҫулта 4 хут, 1955 ҫулта—10 хут;

сосискӑсемпе сарделькисем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,5 хут, 1955 ҫулта—2 хутран та ытла;

аш-какай консервисем туса кӑларассине—1954 ҫулта 1,4 хут, 1955 ҫулта—1,8 хут, вӑл шутран деликатес-консервӑсем 1954 ҫулта 1,4 хут, 1955 ҫулта—2 хут;

аш-какайран хатӗрленӗ ҫурма фабрикатсем 1954 ҫулта 8 хут, 1955 ҫулта—виҫӗ хут;

пельменьсем 1954 ҫулта 1,5 хут, 1955 ҫулта—икӗ хут;

аш-какай котлечӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 40 процент, 1955 ҫулта—80 процент ӳстермелле.

4. Вылькӑхсене ҫитерсе самӑртассине ӳстернипе, вӗсене ҫитӗнтерессине лайӑх организациленипе, ҫавӑн пекех турттарса ҫӳрессине тата хуҫа каясине лайӑхлатнипе суту-илӳ организацийӗсене самӑр, вӑтамран лайӑхрах тата вӑтам самӑртнӑ ӗне ашӗ 1954 ҫулта, рынок фончӗпе танлаштарсан, 57 процентран кая мар, 1955 ҫулта—65 процент тӑратмалла;

самӑр, вӑтамран лайӑхрах тата вӑтам самӑртнӑ сурӑх ашӗ 1954 ҫулта 80 процентран кая мар, 1955 ҫулта—85 процент тӑратмалла.

5. Паштетсем, вылькӑх чӗлхисенчен хатӗрленӗ, фаршланӑ, чӑх какайӗнчен хатӗрленӗ, ветчина туса тата аш-какайран хатӗрленӗ ытти деликатес-консервӑсем туса кӑларассине анлӑн аталантармалла.

6. 1954—1956 ҫулсенче аш-какайран апат-ҫимӗҫ хатӗрлекен 144 предприятие ӗҫе кӗртмелле.

Вылькӑх-чӗрлӗхрен апат-ҫимӗҫ хатӗрлес, ҫу шӑратас, субпродуктсем хатӗрлес ӗҫсене механизацилессине 1953 ҫулта 50 процент пулнинчен 1954 ҫулта 55 процента, 1955 ҫулта 65 процента, 1956 ҫулта 75 процента ҫитермелле.

Колбаса таврашсем, сосискӑсем, сарделькисем, аш-какай консервисем, малтанах виҫҫе хатӗрленӗ ҫурма фабрикатсем, котлетсем, пельменьсем туса кӑлармалли технологи ӗҫсене пӗтӗмпех механизацилесе ҫитермелле, автоматсемпе тата конвейерсемпе анлӑн усӑ курмалла.

Аш-какай комбиначӗсем, кайӑк-кӗшӗк комбиначӗсем, вылькӑх пусакан вырӑнсем санитари тӗлӗшпе тӗп енчен те кӑтартуллӑ таса пулмалла, вылькӑхсемпе кайӑк-кӗшӗксене пусас умӗн пӑхассине чылай лайӑхлатмалла, ытлашши уерӗнипе тата турттарса ҫӳренипе вӗсен виҫине чакма памалла мар.

7. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, ҫӗнӗ предприятисем туса лартнипе тата халӗхи предприятисене реконструкциленипе тата вӗсене техника парса пуянлатнипе СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствин предприятийӗсен хӑватне аш-какай туса кӑларас енӗпе 1,5 хут, кайӑк-кӗшӗк какайӗ туса кӑларас енӗпе—2,7 хут, колбаса таврашсем туса кӑларас енӗпе—1,7 хут, аш-какай консервисем туса кӑларас енӗпе—1,6 хут, котлетсем туса кӑларас енӗпе—7 хут, пельменьсем туса кӑларас енӗпе—5 хут, шӑратнӑ ҫусем туса кӑларас енӗпе—1,7 хут ӳстермелле.

Пулӑ тата пулӑ продукчӗсем енӗпе

8. Пулӑ тата тинӗсри тискер кайӑксене тытассине татӑклӑнах ӳстермелле тата вӗсене тытассине ҫак виҫене ҫитермелле:

	Миллион центнерпа: 1954 ҫул	Миллион центнерпа: 1955 ҫул	1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
Пулӑ тата тинӗсри тискер кайӑксем—пӗтӗмпе	27,15	31,9	156	183
Вӑл шутран:				
Сельдь	5,2	6,7	3,1 хут	2,8 хут
Лосось тата ытти [illegible] пулӑсем	[illegible]	2,5	[illegible]	[illegible]
Треска тата камбала йышши пулӑсем	[illegible]	[illegible]	2 хут	[illegible] хут
Килька тата салака	2,15	2,51	2,8 хут	3,3 хут

1956 ҫул валли пулӑ тытмалли задание 36 миллион центнер таран е, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,1 хут ытларах, вӑл шутран сельдь пулӑсем 7,8 миллион центнер е, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 3,2 хут ытларах чухлӗ ҫирӗплетес.

9. 1955 ҫулта СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе сутлӑх пулӑ продукцийӗ туса кӑларассине 2 миллион та 10 пин тоннӑна ҫитермелле, лайӑх йышши ассортиментлӑ пулӑ продукчӗсем ҫитес ҫулсенче ҫакӑн чухлӗ туса кӑлармалла тӑвас:

	Пиншер тоннӑпа: 1954 ҫул	Пиншер тоннӑпа: 1955 ҫул	1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
Тӑварламасӑр шӑнтнӑ пулӑ	470	650	168	2,3 хут
Тӑварланӑ сельдь	390	480	2,2 хут	2,7 хут
Копченӑй, типӗтнӗ тата балык йышши пулӑ таварӗсем	70	80	156	178
Пулӑ консервисем	520	600	2,6 хут	3 хут

Хура тата хӗрлӗ вӑлча туса кӑларассине ӳстермелле тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатмалла; вӑлчана пӗчӗк банксемпе рынока кирлӗ чухлӗ кӑлармалла. Уйрӑмах деликатес-консервӑсем туса кӑларасси ҫине, уйрӑммӑн илсен—шпротсем тата сардинсем туса кӑларасси ҫине тимлӗн пӑхмалла.

Вӗтӗ пулӑсенчен—килька, салака, хамса, тюлька пулӑсенчен апат-ҫимӗҫ туса кӑларассине чылай лайӑхлатмалла, ҫак пулӑсенчен консервӑсем, паштетсем, шӑнтнӑ тата копченӑй продуктсем туса кӑларассине май килнӗ таран ӳстермелле. Ҫак шутпа Азов, Хура тинӗс, Каспи тата Балти тинӗсӗсем хӗрринче пысӑках мар консерва завочӗсем туса лартмалла.

10. РСФСР, Украина ССР, Литва ССР, Латви ССР, Эстони ССР, Азербайджан ССР, Грузин ССР, Казах ССР тата Узбек ССР Министрӗсен Совечӗсен пулӑ тытассине, шӑнтнӑ, хӗвелпе типӗтнӗ пулӑсем, балыксем, пулӑ консервисем туса кӑларассине чылай ӳстерме кирлӗ мероприятисене палӑртса, вӗсене пурнӑҫа кӗртмелле.

11. Тинӗссенче пулӑ тытассине ӳстерес тата тытнӑ пулӑсене вӑхӑтра йышӑнас, пулӑ тытакан вырӑнсем патӗнчех вӗсенчен продуктсем хатӗрлемелле тӑвас шутпа, 1954—1956 ҫулсенче промысла флотне, пулӑ йышӑнакан транспорт, рефрижератор тата пулӑшу флотне чылай вӑйлатмалла; судносем юсакан предприятисен хӑватне тата запаслӑ пайсем, судно двигателӗсен улӑштармалли деталӗсем туса кӑларассине татӑклӑн ӳстермелле.

12. Пулӑ тытас ӗҫе 1953 ҫулта 67 процент таран механизациленӗ пулсан, 1956 ҫулта механизаци шайне 80 процента ҫитермелле, пулӑсене тасатса продукци хатӗрлес, консервӑсем тӑвас, касса ваклас, тӑварлас, пичкесемпе банкӑсем ҫине вырнаҫтарса хурас, холодильниксенче типсе-пушатас ӗҫсене комплекслӑ майпа механизацилемелле, уйрӑммӑн илсен, пулӑсене суднӑсем ҫинчен пушатас ӗҫе 1953 ҫулта 73 процент таран механизациленӗ пулсан, 1956 ҫулта 85 процент таран, пулӑсене тасатса майлаштарас ӗҫсене 1953 ҫулта 20 процент таран механизациленӗ пулсан, 1956 ҫулта 60 процент таран, вӗтӗ пулӑсене чансенче тата пичкесенче тӑварлассине 1953 ҫулта 50 процент таран механизациленӗ пулсан, 1956 ҫулта 70 процент таран механизацилемелле. Ҫак ӗҫе механизациленӗ линисем тунипе пурнӑҫламалла.

13. Консерва завочӗсен, холодильниксен, пулӑ продукчӗсем хатӗрлекен, баткапичӗсем, суднӑсем тӑвакан тата суднӑсем юсакан предприятисен хӑвачӗпе усӑ курассине лайӑхлатмалла. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле:

пулӑ консервисем тӑвакан предприятисен хӑватне 1953 ҫулхипе танлаштарсан 1,7 хут ӳстермелле;

ҫырансем хӗрринчи холодильниксен хисепне 1953 ҫулхипе танлаштарсан 2 хут тата ҫырансем хӗрринчи пулӑ шӑнтакан холодильниксен тухӑҫлӑхне 2,7 хут ӳстермелле.

Хура тинӗс, Азов, Каспи тата Балти тинӗсӗсен ҫыранӗсенче пысӑках мар холодильниксем туса лартас ӗҫе хӑвӑртлатас шутпа, СССР Вӑрманпа хут промышленность министерствине 1954—1956 ҫулсенче пулӑ промышленноҫӗ валли 120-шер тонна вырнаҫмалӑх пуҫса лартмалли 100 холодильник сурчӗ хатӗрлесе пама хушас. Вӑл шутран 1954 ҫулта ҫавӑн пек холодильниксем валли 25 сурт хатӗрлесе памалла.

14. Паха йышши пулӑсен (осетр, лосось, шӑла, сазан, ҫупах тата ытти йышши пулӑсен) запасне ҫӗнетес тата ҫакӑн йышши пулӑсем тытассине малалла ӳстерсе пырас шутпа, 1954—1956 ҫулсенче пулӑ ӗрчетес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттермелле, ҫак тӗлӗшпе Атӑл, Кура, Дон, Днестр, Днепр, Кубань, Амур юханшывӗсем ҫинче, ҫавӑн пекех Камчаткӑри, Балти тинӗсӗ тӑрӑхӗнчи, Ҫӗпӗрти юханшывсемпе пысӑк шывсем тӑракан вырӑнсенче пулӑ ӗрчетмелли, вӑлча пӑрахтармалли, ҫитӗнтермелли, пулӑ ҫӳретмелли 39 хуҫалӑх тумалла. Государствӑн пӗвесенче пулӑ ӗрчетекен селекци хуҫалӑхӗсемпе форель пулӑ ӗрчетекен ҫӗнӗ хуҫалӑхсем тумалла тата халӗ ӗҫлесе тӑракан хуҫалӑхсене аслӑлатмалла. Вӗсен пысӑкӑшӗ 15 пин гектар чухлӗ пулмалла.

15. Союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене ялхуҫалӑх артелӗсемпе совхозсен пӗвисемпе кӳллисенче пулӑ ӗрчетес ӗҫе анлӑн сарма кирлӗ ӗҫсем туса ирттерме хушас.

Вылькӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ, сыр, ҫӑралатнӑ сӗт тата ытти сӗт-ҫу продукчӗсем енӗпе

16. 1954—1955 ҫулсенче СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе вылькӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ, сыр, ҫӑралатнӑ сӗт тата ытти сӗт-ҫу продукчӗсем туса кӑларассине ҫакӑн чухлӗ хисепе ҫитермелле:

	Пиншер тоннӑпа: 1954 ҫулта	Пиншер тоннӑпа: 1955 ҫулта	1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
Вылькӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ	476	560	149	176
Сыр	97	135	2 хут	2,8 хут
Вӑл шутран:				
Плавленнӑй сыр	37	50	3 »	4,1 »
Ҫӑралатнӑ сӗт (миллионшар банкӑпа)	220	275	2,7 »	3,4 »
Типӗтнӗ сӗт	30	38	3,2 »	4 »
Хӑйминчен уйӑрман сӗт	2.300	2.750	2 »	2,4 »

1956 ҫулта вылькӑх-чӗрлӗх ҫӑвӗ 650 пин тонна яхӑн е 1950 ҫулхинчен икӗ хут ытларах, сыр 160 пин тонна е 1950 ҫулхинчен 3,3 хут ытларах туса кӑлармалла.

17. 1954—1955 ҫулсенче, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, сӗт-ҫу продукчӗсем туса кӑларассине ҫак хисепе ҫитермелле:

тӑварламан ускамҫу туса кӑларассине 1954 ҫулта 30 процент, 1955 ҫулта 50 процент ӳстермелле; ускамҫӑвӑн пахалӑхне тата сортлӑхне чылай лайӑхлатмалли ӗҫсем туса ирттермелле;

малтанах виҫҫе хатӗрленӗ ускамҫу туса кӑларассине 1954 ҫулта 2 хут, 1955 ҫулта 2,5 хут ӳстермелле;

малтанах виҫҫе савӑтсене тултарнӑ сӗт, кефир тата ытти сӗт-ҫу продукчӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,8 хут, 1955 ҫулта 2 хут ӳстермелле;

пӗчӗк савӑтсене тултарнӑ ҫӑралатнӑ сӗт туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,5 хут, 1955 ҫулта 2 хут ӳстермелле;

какао тата кофе хутӑштарса ҫӑралатнӑ сӗт туса кӑларассине чылай ӳстермелле, стерилизованнӑй ҫӑралатнӑ сӗт туса кӑларас ӗҫе анлӑ сармалла.

18. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе ҫӗнӗ предприятисем лартса, халӗ ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетсе тата техникӑпа пуянлатса, вӗсен хӑватне ускамҫу туса кӑларас енӗпе—1,5 хут, сыр туса кӑларас енӗпе—2,5 хут, ҫав шутран плавленнӑй сыр туса кӑларас енӗпе—7 хут, ҫӑралатнӑ сӗт туса кӑларас енӗпе—3,4 хут, типӗтнӗ сӗт туса кӑларас енӗпе—3 хут, хӑйминчен уйӑрман сӗт туса кӑларас енӗпе—1,7 хут ытларах ӳстермелле.

(Малалли 2-мӗш страницӑра).

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗн

Апат-ҫимӗҫ таварӗсем туса кӑларассине ӳстересси тата вӗсен пахалӑхне лайӑхлатасси ҫинчен

(Малалла).

19. Ҫу завочӗсемпе сыр завочӗсене механизацилес ӗҫе анлӑн туса пымалла, 1954—1956 ҫулсенче ҫав заводсене ҫу тӑвакан тата сыр тӑвакан тӗп районсенче пӗтӗмпех механизациллесе ҫитермелле.

20. 1954—1956 ҫулсенче ҫакӑн чухлӗ заводсем туса, вӗсене ӗҫе ямалла: ҫу, сыр тӑвакан тата сӗте малтанлӑха хӑйӑмаран уйӑракан тата ултей ытти продуктсен тӑвакан заводсем—720, хуласенчи ҫу завочӗсем—100, сӗтпе консерва завочӗсем—16, усламсӳ, сыр, ытти сӗт-ҫу продукчӗсем йышӑнма тата упрама холодильниксем тытакан базӑсем — 80.

21. Сӗт пахалӑхне тата ытти сӗт-ҫу продукчӗсен пахалӑхне сыхласа усрамалла тата вӗсене хӑйӑх вӑйӑн хуласене хӑвӑртрах илсе пымалла тӑвас шутпа, ҫапла тума кирлӗ тесе шутлас: сӗт тата сӗт-ҫу продукчӗсем турттарас ӗҫре ятарласа тунӑ автомобиль, чугун ҫул тата шыв транспорчӗпе усӑ курассине чылай ӳстермелле.

Ӳсентӑран ҫӑвӗ тата супӑнь енӗпе

22. 1954—1955 ҫулсенче СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе ӳсентӑран ҫӑвӗ тата супӑнь туса кӑларассине ҫакӑн чухлӗ хисепе ҫитермелле:

	Пиншер тоннӑпа		1954 султа, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 султа, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Ӳсентӑран ҫӑвӗ	1300	1500	167	192
Супӑнь (40 процентли ҫине куҫарса шутласан)	1.000	1.200	125	150

1956 ҫулта ӳсентӑран ҫӑвӗ 1.650 пин тоннӑна яхӑн е 1950 ҫулхинчен 2,1 хут ытларах туса кӑлармалла.

23. Ӳсентӑран ҫӑвне малтанах вирӗе хатӗрлесе тата савӑтсене тултарса кӑларассине 1953 ҫулхинчен нумай ытларах ӳстермелле: 1954 ҫулта—5 хут, 1955 ҫулта 10 хут ытларах туса кӑлармалла.

Рафинированнӑй ӳсентӑран ҫӑвӗ туса кӑларассине ӳстермелле, уйрӑммӑн илсен, ҫакна ӳсентӑран ҫӑвне тасатса кӑларакан 20 цех ҫӗнӗрен лартмалла тумалла, ҫав цехсен пӗтӗм хӑвачӗ талӑкра 510 тонна ҫу тасатса кӑлармалӑх пулмалла. Асӑннӑ цехсене пуринчен ытларах Украина ССР-ӗнче, Воронеж, Куйбышев, Сталинград, Новосибирск облаҫӗсенче, Краснодар, Ставрополь тата Алтай крайӗсенче тумалла.

Халӑха ӳсентӑран ҫӑвӗ ассортимент енӗпе яланах пӗр пек хисепре сутса тӑмалла тума 1954—1955 ҫулсенче ҫу ҫапакан заводсенчи ҫу усрамалли баксене 40 пин тонна кӗмелӗх пысӑклатмалла.

Ӳсентӑран ҫӑвӗн пахалӑхне, уйрӑмах республикӑсене пӑхӑнса тӑракан предприятисем туса кӑларакан ҫу пахалӑхне чылай лайӑхлатмалла.

24. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе ҫӗнӗ предприятисем лартса, халӗ ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетсе тата техникӑпа пуянлатса, вӗсен ҫу туса кӑларас хӑватне 1,7 хут тата хуҫалӑхра кирлӗ супӑнь (40—25 процентлисем ҫине куҫарса шутласан) туса кӑларас хӑватне 1,5 хут ӳстермелле.

25. Ӳсентӑран ҫӑвӗ нумайрах туса кӑларас тата ҫу культурисен вӑррине инҫете турттарса ҫӳрессине чакарас шутпа, ҫапла тума кирлӗ тесе шутлас: 1954—1956 ҫулсенче ҫӗнӗрен 24 ҫу комбиначӗпе завочӗ туса лартса, вӗсене ӗҫе ямалла, ҫав ҫулсенчех 10 ҫу комбинатне, чи малтан Вӑтам Ази, Инҫет Хӗвелтухӑҫ тата Ҫӗпӗр районӗсенче, тума тытӑнмалла.

Хуҫалӑхра кирлӗ супӑнӗн пахалӑхне, тӗсне, шӑршине чылай лайӑхлатмалла, ӑна илемлӗн курӑнакан туса кӑлармалла.

26. Ҫӑва тӗтӗшах лайӑх вӗсе кӑлармалли меслетсене пурнӑҫламалла тата пӗрмаях ӗҫлекен автоматла прессемпе усӑ курмалла туса, ҫу завочӗсене техника тӗлӗшӗнчен ҫӗнетес ӗҫе пурнӑҫласа ҫитермелле. Ҫакӑ вара продукци пахалӑхне лайӑхлатма май парать, производствӑри вӑй нумай ыйтакан ӗҫсене чылай сахаллатать, вӑрӑран ҫу нумайрах ҫапса кӑларма май парать. Супӑнь пӗҫернӗ ҫӗрте ҫулӑй синтетически кислотасемпе анлӑн усӑ курмалла, апат-ҫимӗҫ тумалли пахаӳсентӑран ҫуне перепетлесе хӑвармалла, халиччен унпа супӑнь тунӑ ҫӗрте усӑ курнӑ. Ӳсентӑран вӑррине тасатса ҫу ҫапма юрӑхлӑ тӑвакан, сусене тасатса лайӑхлатакан тата вакласа вӗлтерекен, тӗтӗшах ӗҫлекен установкӑсене ӗҫе вӗртмелле.

27. Ӳсентӑран вӑррине лайӑх усрама тата ӑна пӑсӑласран сыхлама 1954—1955 ҫулсенче ҫу завочӗсенче пӗтӗмпе 300 пин тонна чӗртавар усрамалӑх базӑсем тумалла, кашни ҫу завочӗ ҫумӗнчех усрама хумалли вӑрра типӗтме сушилкӑсем тумалла.

28. Ҫӑм тата пурҫӑн пир-авӑра ҫумалли порошоксем туса кӑларассине чылай ӳстермелле, ҫакӑ вӑл асӑннӑ пир-авӑрӑн ҫӗтӗлес срокне вӑрахлатма тата вӗсен тӗсне сыхласа усрама май парать. Ҫак шутпа 1954—1956 ҫулсенче ҫу комбиначӗсем ҫумӗнче кӗпе ҫумалли порошок тӑвакан 4 завод лартмалла, вӗсен пӗтӗм хӑвачӗ ҫулталӑкра пӗтӗмпе 50 пин тонна порошок, ҫав шутра ҫӑм тата пурҫӑн пир-авӑра ҫумалли порошок 10 пин тонна туса кӑлармалӑх пулмалла.

Маргарин енӗпе

29. 1954—1955 ҫулсенче маргарин туса кӑларассине татӑклӑнах ӳстермелле, ӑна ҫакӑн чухлӗ туса кӑлармалла:

	Пиншер тоннӑпа		1954 султа, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 султа, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Маргарин	390	450	2 хут	2,3 хут
Вӑл шутран:				
Столовӑй маргарин	211	250	2,9 »	3,4 »
Кукньӗра усӑ курмалли маргарин	179	200	150	167

1956 ҫулта маргарин 510 пин тонна туса кӑлармалла, е ӑна туса кӑларассине 1950 ҫулхинчен 2,7 хут ӳстермелле.

30. Майонез туса кӑларассине чылай ӳстермелле. Пахча ҫимӗҫрен, аш-какайран тата пулӑран тунӑ апат ҫимне хушма ҫынсем майонез нумай ыйтаҫҫӗ. Рынок валли майонез мӗн чухлӗ кирлӗ, ҫавӑн чухлӗ туса кӑлармалла.

31. 100 тата 200 граммшар малтанах вирӗе чӗркенӗ маргарин 1953 ҫулхинчен чылай нумайрах туса кӑлармалла: ӑна туса кӑларассине 1954 ҫулта, 1953 ҫулхипе танлаштарсан—28 процент тата 1955 ҫулта 1.7 хут ӳстермелле.

32. Маргарин пахалӑхне лайӑхлатмалла тата чи лайӑх сортлӑ маргарин туса кӑларассине ӳстермелле, 1953 ҫулта пӗтӗм маргарин хисепӗнче чи лайӑх сортлисем 85,2 процент пулсан, вӗсен хисепне 1954 ҫулта 86,5 процента, 1955 ҫулта 87.5 процента тата 1956 ҫулта 90 процента ҫитермелле.

Маргарин пахалӑхне сыхласа усрас тата ӑна предприятисенчен суту-илӳ тунӑ ҫӗре илсе пынӑ чухнехи санитари условийӗсене лайӑхлатас шутпа, хуласенче магазинсене маргарин ятарласа тунӑ транспортпа ҫеҫ илсе пырас пулать.

33. Хӑйӗн тутипе усламҫупа пӗр евӗрлӗ маргарин туса кӑларассине пурнӑҫлама производствӑра ҫӑва питех те вӗри ҫӗрте тата тачӑ хупса тӗтӗшах тасатассине тата лайӑхлатассине ӗҫе кӗртсе пымалла, маргарин рецепчӗсенче ҫусен ассортиментне нумайлатмалла, маргарина тутлӑ шӑршлӑ тата витаминлӑрах туса кӑлармалла, маргарина нумай вӑхӑт хушши пӑсӑлмасӑр усранмалла тӑвас пулать.

34. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, ҫӗнӗ предприятисем лартса, халӗ ӗҫлекен предприятисене аслӑлатса, урӑхлатса ҫӗнетсе тата механизацилесе, ҫав предприятисен маргарин туса кӑларас хӑватне 1,5 хут ӳстермелле.

35. 1954—1956 ҫулсенче Сталинград, Тула, Уфа, Караганда, Красноярск, Алма-Ата, Иркутск, Омск, Кемерово, Хусан, Барнаул тата Вологда хулисенче 12 маргарин завочӗ лартмалла, вӗсен пӗтӗм хӑвачӗ ҫулталӑкра 142 пин тонна маргарин туса кӑлармалӑх пулмалла.

Сахӑр енӗпе

36. Сахӑр-песок тата сахӑр-рафинад туса кӑларассине тата вӗсене малтанах вирӗе хатӗрлессине ҫак виҫене ҫитермелле:

	Пиншер тоннӑпа		1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Сахӑр-песок	4.200	4.600	170	190
Сахӑр-рафинад	1.550	1.650	198	2,2 хут
Вӑл шутра вирӗе хатӗрлени:				
Пачкӑсем	150	275	4,2 хут	7,8 хут
Пӗчӗк пакетсене чӗркени (рестораннӑй).	3,5	8	11,5 хут	16 хут

1956 ҫулта сахӑр-песок туса кӑларассине 5.300 пин тоннӑна ҫитермелле, урӑхла каласан, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,1 хут ӳстермелле тата сахӑр-рафинад туса кӑларассине 1.800 пин тоннӑна ҫитермелле, урӑхла каласан, 1955 ҫулхипе танлаштарсан, 2,6 хут ӳстермелле.

Суту-илӳ культурине ӳстерес шутпа промышленноҫӑн пысӑк центрсем ҫывӑхӗнчи сахӑр завочӗсене сахӑр-песока, вӗтӗ касӑклӑ рафинада тата вӗтӗ сахӑра виҫсе чӗркесе хатӗрлессине организацилемелле, ҫакӑн йышши продукцие 1954 ҫулта 50 пин тонна, 1955 ҫулта 100 пин тонна туса кӑлармалла.

37. Ҫӗнӗ заводсем туса, халӗ ӗҫлекен заводсене ҫӗнетсе лайӑхлатса тата техникӑпа пуянлатса, хӑватлӑха сахӑр-песок енӗпе 1,4 хута яхӑн, сахӑр-рафинад енӗпе 2,2 хут ӳстермелле.

38. Сахӑр кӑшмане вӑхӑтра хатӗрлес тата ӑна инҫете кӳрсе кайассине чакарас шутпа 1954—1956 ҫулсенче:

сахӑр-песок тӑвакан 25 завода, чи малтан Украинӑри хӗвелтухӑҫ облаҫӗсенче тата Молдаван ССР-ӗнче, ӗҫе вӗртмелле, унта халӗ сахӑр кӑшманне хатӗрлемелли хӑватсем ҫителӗксӗр-ха;

сахӑр-рафинад тӑвакан 9 заводпа цеха ӗҫе вӗртмелле;

пӗтӗмпе 1.100 пин тонна сахӑр кӑшманӗ хумалӑх складсем туса лартмалла, вӑл шутран 300 пин тонна хумалӑх складсене 1954 ҫулта туса пӗтермелле.

Кондитер таварӗсем тата чей енӗпе

39. Кондитер изделийӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1.579 пин тоннӑна, 1955 ҫулта 1.825 пин тоннӑна ҫитермелле, 1950 ҫулта 994 пин тонна тата 1953 ҫулта 1.387 пин тонна туса кӑларнӑ. Вӑл шутра кондитер изделийӗсем туса кӑларассине СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе ҫак виҫене ҫитермелле:

	Пиншер тоннӑпа		1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Карамельсем	526	591	124	140
Ҫемҫе конфет	175	195	184	2 хут
Шоколад тата шоколад изделийӗсем	12	20	2,3 хут	3,8 хут
Ирис	44	60	4,2 хут	5,8 хут
Мармелад, пастила тата зефир	26	36	2 хут	2.8 хут
Халва	43	48	2,9 хут	3,3 хут
Печени	340	420	2,4 хут	2,9 хут
Тортсем, пирожнӑйсем, кекссем	21	30	3,1 хут	4,4 хут

40. Халӑх нумай ыйтакан кондитер изделийӗсен пахалӑхне чылай лайӑхлатмалла тата вӗсен ассортиментне нумайлатмалла, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе 1954—1955 ҫулсенче, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, ҫакӑн чухлӗ ӳстермелле:

а) чӗркенӗ тата виҫсе хатӗрленӗ кондитер изделийӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,2 хут, 1955 ҫулта 1,5 хут ӳстермелле;

б) коробкӑсем ӑшне хунӑ тата виҫсе хатӗрленӗ лайӑхлатнӑ кондитер изделийӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,5 хут, 1955 ҫулта 2 хут ӳстермелле;

в) шуҫ банкӑсене тата коробкӑсене хунӑ кондитер изделийӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 1,7 хут, 1955 ҫулта 3,3 хут ӳстермелле;

г) ӑшне вӗтетнӗ мӑйӑр хунӑ карамельсемпе конфетсем («Раковая шейка», «Гусиные лапки» йышшисене), фруктсемпе сӗт-ҫу хунӑ карамельсемпе конфетсем («Золотой ключик» ирис йышшисем), ликер, пыл, крем хунӑ тата сивӗтекен япаласем хунӑ карамельсем, ҫавӑн пекех леденцовӑй карамельсем («Театральная», «Прозрачная» йышши), «Косолапая мишка» тата «Лебедь» йышши конфетсем, пастиласем, зефир, хутпа чӗркенӗ илемлӗ шоколадсем, ачасем валли илемлетсе тунӑ шоколадсем туса кӑларассине ӳстермелле, шоколад, карамель, печени, премӗн тата мармелад пахалӑхне лайӑхлатассипӗн уйрӑмах тӑрӑшмалла.

41. Центропромсовета 1954 ҫулта карамельсемпе конфетсем 70 процент хутсемпе чӗркесе кӑларма тата печенисем 50 процент чухлӗ уйрӑм пачкӑсемпе туса кӑларма хушас. Чи пахи ҫӑнӑхран премиксемпе печенисем 80 процент туса кӑлармалла, тульски, виземски, ванильнӑй тата мятнӑй премӗксемпе печенисем тата ытти тутлӑ ҫимӗҫсем туса кӑларассине ӳстермелле.

Кондитер изделийӗсен ассортиментне ӳстермелле, вӗсене рецептурӑсемпе ГОСТсем, кондитер промышленноҫӗн государство предприятийӗсем валли туса хатӗрленӗ нормӑсем тӑрӑх тумалла.

42. Карамельсем, ирис, печени туса кӑларас технологилле ӗҫсене 1956 ҫулта механизациллесе ҫитермелле.

Механизациленӗ майпа чӗркенӗ тата виҫсе хатӗрленӗ кондитер изделийӗсем туса кӑларассине 1954 ҫулта 70 процента, 1955 ҫулта 75 процента, 1956 ҫулта 85 процента ҫитермелле, 1953 ҫулта ҫавӑн пек майпа продукци 60 процент туса кӑларнӑ.

43. 1950 ҫулхипе танлаштарсан, кондитерски предприятисен хӑватне, ҫӗнӗ фабрикӑсем, тӗпрен илсен, Уралта, Ҫӗпӗрти, Атӑл тӑрӑхӗнчи, Вӑтам Азири тата Казахстанри районсенче ҫӗнӗрен тунипе, ҫавӑн пекех халӗ ӗҫлекен кондитерски фабрикӑсене лайӑхлатса ҫӗнетнипе, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе сахӑртан кондитер изделисем туса кӑларас енӗпе 1,9 хут тата ҫӑнӑхран кондитер изделисем туса кӑларас енӗпе 2,1 хут ӳстермелле.

44. Мороженӑй туса кӑларассине чылай ӳстермелле, вӑл пӗтӗм халӑх ыйтакан продукт пулса тӑчӗ, ӑна туса кӑларассине СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе тата СССР Суту-илӳ министерстви енӗпе 1954 ҫулта 190 пин тоннӑна ҫитермелле, 1955 ҫулта 240 пин тоннӑна ҫитермелле, ҫакӑ вӑл 1950 ҫулхипе танлаштарсан, производствӑна 2,5 хут ӳстермеллине пӗлтерет, 1953 ҫулта 160 пин тонна туса кӑларнӑ пулнӑ.

Мороженӑй пахалӑхне чылай лайӑхлатма май паракан мерӑсем йышӑнмалла тата мороженӑйсем туса кӑларакан предприятисене санитари тӗлӗшпе лайӑхлатса ҫитермелле. Мороженӑйсене виҫсе хатӗрлес, илемлетсе кӑларас ӗҫе анлӑ туса пымалла.

СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе тата СССР Суту-илӳ министерстви енӗпе, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, мороженӑй туса кӑларас хӑватсене 1956 ҫулта 1,6 хут ӳстермелле.

45. Байховӑй тата хура чей енӗпе халӑх ыйтӑвне ҫителӗксӗр тивӗҫтернине шута илсе, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствине чейӑн ҫав сорчӗсене туса кӑларассине чылай ӳстерес тӗлӗшпе ӗҫсем туса ирттерме хушас.

46. Чейӑн пахалӑхне лайӑхлатас, тутлӑ шӑршӑ кӗмелле тӑвас, ассортиментне тата ӑна виҫсе хатӗрлессине лайӑхлатас шутпа:

а) байховӑй хура чей 25 грамм турттакан пачкӑсемпе кӑларассине 1954 ҫулта, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, 1.3 хут тата 1955 ҫулта 2 хут ӳстермелле;

б) 1953 ҫулхипе танлаштарсан, байховӑй хура чей хытӑ хутпа чӗркесе кӑларассине 1954 ҫулта 2,8 хут, 1955 ҫулта 4 хут ӳстермелле;

в) байховӑй хура чее тимӗртен тата кантӑкран тунӑ савӑт-сапана хурса туса кӑларассине, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, 1954 ҫулта 2.5 хут тата 1955 ҫулта 5 хут ӳстермелле;

г) байховӑй хура чее пачка ӑшне фольга хурса кӑларассине 1954 ҫулта мӗнпур туса кӑларнӑ чей хисепӗн 55 процентӗ чухлӗ, 1955 ҫулта 100 процент чухле ҫитермелле.

47. Байховӑй хура чее малтанах виҫсе хатӗрлесе кӑларас ӗҫе 1954 ҫулта 86 процент, 1955 ҫулта 90 процент, 1956 ҫулта 95 процент чухлӗ механизацилесе ҫитермелле.

Чей ҫулҫисенчен чей туса хатӗрлес тӗлӗшпе вӑй нумай ыйтакан ӗҫсене малалла механизацилесе тата автоматизацилесе пымалла.

48. Чей промышленность предприятийӗсен хӑватне 1956 ҫулта, ҫӗнӗ предприятисем туса лартнипе, халӗ ӗҫлекеннисене ҫӗнетсе лайӑхлатнипе тата техника парса пуянлатнипе, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, симӗс чей ҫулҫисене чей туса хатӗрлес енӗпе 2,1 хут, чей виҫсе хатӗрлес енӗпе 1,9 хут, чей пусарса хытарас енӗпе 1,8 хут ӳстермелле.

Ҫӑкӑрсемпе булкӑсем, макаронсем тата ҫӗпресем енӗпе

49. Халӑх юлашки ҫулсенче пахи йышши, уйрӑмах лайӑх сортлӑ тулӑ ҫӑнӑхӗсенчен пӗҫернӗ ҫӑкӑрсемпе булкӑсем (штукӑн сутакан ҫӑкӑр, булкӑсем, слобасем, сухарисем, шупикӑсем) ытларах ыйтнӑ чирпи тата ахаль сортлӑ ҫӑкӑрсем илесси чакса пынӑ май, СССР Госпланне, СССР Суту-илӳ министерствине тата СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствине ҫӑкӑрсемпе булкӑсем пӗҫермелли плансене тунӑ чухне халӑхӑн ҫав ыйтӑвӗсене шута илме хушас.

50. Сӑсӑлтан уйӑрса вӗтӗ авӑртнӑ ырашпа тулӑ ҫӑнӑхӗнчен тата сортлӑ ҫӑнӑхран штукӑн сутакан, уйрӑмах штукӑн сутакан лайӑхлатнӑ йышши ҫӑкӑр (заварнӑй, бородински, мински, рижски ҫӑкӑрсем) пӗҫерсе кӑларассине ҫакӑн чухлӗ ӳстерес:

	(Тӗрлӗ сортлӑ ҫӑнӑхран, пӗҫернӗ пӗтӗм ҫӑкӑрпа булкӑсен процентӗ ҫакӑн чухлӗ пулмалла)		1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, ҫакӑн чухлӗ ӳсет
	1954 ҫулта	1955 ҫулта	
Сӗсӗлтен уйӑрса вӗтӗ авӑртнӑ ырашпа тулӑ ҫӑнӑхӗнчен	20	30	5,0 хут
Сортлӑ тулӑ ҫӑнӑхӗнчен	62	68	2,9 хут

51. Макаронсем туса кӑларассине 1954—1955 ҫулсенче ҫак хисепе ҫитермелле:

	Пиншер тоннӑпа		1954 ҫулта 1950 ҫулхинчен ҫакӑн чухлӗ ӳсет	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, ҫакӑн чухлӗ ӳсет
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Макаронсем	872	1.030	2 хут	2,3 хут

Макаронсен ассортиментне лайӑхлатмалла, малтанах виҫсе чӗркесе хунӑ трубчатӑй, ӑҫхе тата лайӑхлатнӑ йышши макарон ҫимӗҫӗсем туса кӑларассине ӳстермелле.

52. Ҫӗпресем туса кӑларассине нумай ӳстермелле, вӗсене рынок ыйтнине тивӗҫтерелӗх туса кӑлармалла, 1954 ҫулта ҫӗпре 86 пин тонна таран, 1955 ҫулта 95 пин тонна таран, 1950 ҫулхинчен икӗ хут ытларах туса кӑлармалла.

1955 ҫулта ҫӗпресене малтанах виҫсе пӗчӗккӗн чӗркесе кӑларассине, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 4,2 хут ӳстермелле.

53. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви енӗпе ҫӗнӗ предприятисем лартса, хальхи вӑхӑтра ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетсе, техникӑпа пуянлатса, вӗсен хӑватне макаронсем туса кӑларас тӗлӗшпе 2,3 хут тата ҫӗпресем туса кӑларас тӗлӗшпе 2.7 хут ӳстермелле.

54. 1954—1956 ҫулсенче центрти районсенче, Атӑл тӑрӑхӗнчипе Хӗвелтухӑҫ Ҫӗпӗрти районсенче ырашран хӗрлӗ салат тӑвакан виҫӗ завод лартмалла, вӗсен хӑвачӗ талӑкра 30-шар тонна салат туса кӑлармалӑх пулмалла, ҫав салат ыраш ҫӑнӑхӗнчен лайӑхлатнӑ заварнӑй сорт ҫӑкӑр пӗҫерме каймалла.

55. Ҫӑкӑр пӗҫерекен предприятисем нумай лартмалла, хальхи вӑхӑтра ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетмелле, вӗсенче ҫӗнӗ техникӑпа ӗҫлечелле тумалла. 1953—1956 ҫулсенче хуласемпе рабочи поселоксенче СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствин 372 ҫӑкӑр завочӗпе механизациленӗ пекарня туса лартмалла.

Тортсем, пирожнӑйсем, печени тата макарон ҫителӗксӗр пӗҫерекен хуласенче ҫӑкӑр завочӗсене ҫӑкӑр пӗҫерекен предприятисен проекчӗсем тӑрӑх лартмалла, вӗсенче кондитер ҫимӗҫӗсемпе макарон ҫимӗҫӗсем туса кӑларакан цехсем пулмалла.

56. 1954 ҫулта ҫӑкӑр пӗҫерекен промышленноҫра ҫӑнӑх алас, чуста ҫӑрас, шушкӑсем тумалли чустана йӑвалас ӗҫсен процесӗсене тата 1955 ҫулта—чустана пуҫтас, унта хутӑштармалли ҫимӗҫсене ярас тата ҫӑкӑра виҫсе ярас ӗҫсен процесӗсене пӗтӗмпех механизацилесе ҫитермелле.

57. Ҫӑкӑрсемпе булкӑсене транспортпа турттарса ҫӳренӗ чухне вӗсен пахалӑхне сыхласа усрас, ҫав ҫимӗҫсене суту-илӳ тунӑ ҫӗре турттарнӑ чухнехи санитари условийӗсене лайӑхлатас тӗллевпе ҫапла тума кирлӗ тесе шутлас: ҫӑкӑрсене суту-илӳ тунӑ ҫӗре ҫӑкӑр пӗҫерекен промышленноҫӑн ятарласа тунӑ транспорчӗпе нумайрах турттарса пырас ӗҫе организацилемелле, ҫак ӗҫе хуласенче СССР Суту-илӳ министерствипе килӗштернӗ списоксем тӑрӑх туса пымалла. 1954 ҫултан пуҫласа хуласенче суту-илӳ тунӑ ҫӗре пирожнӑйсене, тортсене, кекссене ятарласа тунӑ автомобильсемпе турттармалла.

58. Республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене, Центросоюза, СССР Ҫул-йӗр министерствине, Металлурги промышленность министерствине, Ҫӗр кӑмрӑк промышленность министерствине, Вӑрманпа хут промышленность министерствине тата ҫӑкӑр пӗҫерекен предприятисем тытакан ытти министерствӑсемпе ведомствӑсене ҫӑкӑр пӗҫерекен промышленноҫа малалла аталантарма, механизацилеме, санитари условийӗсене лайӑхлатма, ҫӑкӑрсемпе булкӑсен пахалӑхне чылай лайӑхлатма тата вӗсен ассортиментне нумайлатма, ҫӑкӑра суту-илӳ тунӑ ҫӗре турттармалли ятарласа тунӑ транспортӑн хисепне ӳстерме кирлӗ ӗҫсене тума хушас.

Ҫӑнӑхпа кӗрпе енӗпе

59. 1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, лайӑх сортлӑ ҫӑнӑхпа кӗрпе туса кӑларассине ҫакӑн чухлӗ ӳстермелле:

Чи лайӑх сортлӑ ҫӑнӑх	2,8 хут
Пӗрремӗш сортлӑ ҫӑнӑх	2.1 »
Ытти йышши сортлӑ ҫӑнӑх	1,6 »
Вир кӗрпи	1,5 »
Хура тулӑ кӗрпи	1,7 »
Пӑрҫа	3,8 »

60. 1956 ҫул вӗҫленнӗ тӗле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, Главмука енӗпе ҫӗнӗ армансем, кӗрпе завочӗсем лартса, хальхи вӑхӑтра ӗҫлекен предприятисене урӑхлатса ҫӗнетсе тата техникӑпа пуянлатса, тырӑ авӑртса ҫӑнӑх тата кӗрпе тӑвакан промышленноҫӑн предприятийӗсен хӑватне ҫӑнӑх туса кӑларас енӗпе 1,4 хут, кӗрпе туса кӑларас енӗпе 1,2 хут ӳстермелле.

Тырӑ авӑртса ҫӑнӑх тата кӗрпе тӑвакан промышленноҫӑн хӑватне малалла ӳстерсе пыма 1955 ҫулта 25 арман комбиначӗ, 11 кӗрпе завочӗ тата кӗрпе цехӗсем тума тытӑнмалла.

61. СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствине ҫапла тума хушас:

а) ҫӑнӑх пахалӑхне СССР Министрӗсен Совечӗ 1953 ҫулхи майӑн 13-мӗшӗнче йышӑннӑ 247 номерлӗ постановленире каланӑ пек лайӑхлатмалла, ырашпа сӗсӗлран уйӑрса вӗтӗ авӑртнӑ ҫӑнӑх 95 процент тухмалла, тулла сӗсӗлрен уйӑрса вӗтӗ авӑртнӑ ҫӑнӑх 96 процент тухмалла, иккӗмӗш сортлӑ тулӑ ҫӑнӑхӗ (пӗр сортлӑ туса авӑртнӑ чухне) 85 процент тухмалла тӑвас пулать, ҫав сортлӑ ҫӑнӑхсене вӗтӗрех авӑртмалла;

б) сортлӑ ҫӑнӑхпа кӗрпене малтанах виҫсе тултарса хурас ӗҫе организацилемелле, малтанах виҫсе тултарса хатӗрленӗ ҫӑнӑх 1954 ҫулта 50 пин тонна тата 1955 ҫулта—250 пин тонна, кӗрпе 1954 ҫулта—10 пин тонна тата 1955 ҫулта—30 пин тонна туса кӑлармалла; пысӑк промышленноҫлӑ центрсенче, пуринчен малтан Мускав, Ленинград, Киев, Свердловск, Молотов хулисенчи армансем ҫумӗнче ҫӑнӑхпа кӗрпене малтанах виҫсе тултаракан цехсем лартмалла, малтанах виҫсе тултарнӑ ҫӑнӑха турттарма валлӑ тавӑрса паракан михӗсемпе усӑ курмалла.

62. Государство тыррине сортлӑ ҫӑнӑх тума авӑртакан предприятисен хӑватне ӳстерес тата колхозсемпе колхозниксене государствӑн ялхуҫалӑхӗнчи ҫӑнӑх авӑртакан предприятийӗсенче тырӑ авӑртма май туса парас ӗҫе лайӑхлатас шутпа союзлӑ республикӑсен Министрӗсен Совечӗсене ҫапла тума хушас:

а) тырӑ авӑртакан ҫав предприятисен ӗҫне чылай лайӑхлатмалла тата сортлӑ ҫӑнӑх авӑртас енӗпе вӗсен производство хӑватне ӳстермелле;

б) 1954—1956 ҫулсем валли тӑвакан плансенче государство ресурсӗсенчи тырра авӑртакан армансем ҫумӗнче складсем тума палӑртмалла, ҫав складсенче 30 талӑк хушши авӑртмалӑх тырӑ, 15 талӑк хушшинче хатӗрленӗ продукци тытса усрама май пулмалла;

в) авӑртнӑ чухне ҫӑнӑхпа кӗрпен пахалӑхне лайӑхлатма мерӑсем йышӑнмалла тата 1954 ҫулта вальцевӑй армансенче производство лабораторийӗсем организацилемелле;

г) вальцевӑй армансем сук районсенче тырра ҫӑнӑхпа улӑштармалли пунктсен ӗҫне лайӑхлатмалла, кирлӗ пулсан ҫавӑн пек пунктсем ҫӗнӗрен организацилемелле;

д) армансен оборудованине, сурчӗсене тата гидротехника сооруженийӗсене юсамалла, ҫавӑн пекех тата оборотран уйӑрса паракан 10 процент укҫа шучӗпе армансене урӑхлатса ҫӗнетмелле, вӗсене лайӑхлатмалла, ҫавӑн чухне уйрӑмах пневматикла транспортпа тата тырӑ авӑртас технологин лайӑхлатнӑ схемисемпе туллин усӑ курмалла тума тӑрӑшас пулать.

Консервӑсем тата апат-ҫимӗҫ концентрачӗсем енӗпе

63. Пахча ҫимӗҫ, томат, улма-сырла консервисем 1950 ҫулта 922 миллион банка туса кӑларнӑ тата 1953 ҫулта 1.363 миллион банка туса кӑлармалла пулсан, ҫав консервӑсене туса кӑларассине СССР Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствин предприятийӗсенче 1954 ҫулта 1.780 миллион банка тата 1955 ҫулта 2.045 миллион банка таранах ҫитерес. Ку продукцие туса кӑларассине ҫакӑн пек ассортимент енӗпе ӳстермелле:

	Миллионшар банкӑпа		1954 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 ҫулта	1955 ҫулта		
Пахча ҫимӗҫ консервисем	410	460	2,5 хут	3 хут
Томат консервисем	510	560	171	190
Улма-сырла консервисем	755	855	187	2 хут
Аш-какайпа ӳсентӑран консервисем	65	70	2 хут	2,2 хут
Салӑпа пӑрҫаран тунӑ консервӑсем	40	80	160	3,2 хут

1956 ҫулта пахча ҫимӗҫ, томат тата улма-сырла консервисем 3.500 миллион банкӑна яхӑн туса кӑлармалла, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 3,7 хут ӳстермелле. Мӗнпур йышши консервӑсем (аш-какай, пулӑ, сӗт, пахча ҫимӗҫ, томат, улма-сырла консервисем) туса кӑларассине 4.150 миллион банкӑна ҫитермелле, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,9 хут ӳстермелле.

(Юлашки 3-мӗш страницӑра).

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитетĕнче

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен

(Юлашки).

64. Апат-çимĕç концентрачĕсен промышленносĕн продукцине çакăн чухлĕ туса кăлармалла:

	Пиншер тоннăпа		1954 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 çулта	1955 çулта		
Апат-çимĕç концентрачĕсем	90	100	167	185
Вăл шутра типĕ кĕселсем	30	35	120	140
Типĕ апат	10	15	3,3 хут	5 хут
Геркулес, тинкĕле, ача-пăча валли кăларакан çăнăх	42	50	2 хут	2,4 хут

65. Пахча çимĕçсемпе çĕрулмине типĕтни вĕсене инçетри районсене çултаăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те турсе ыыма, чĕрĕ пахча çимĕçсемпе çĕрулмине инçете турттарса çÿрессине чакарма, вĕсене турттарнă тата усранă чухне сухатусем пуласcине чакарма, пахалăхне сыхласа хăварма пулăшакан паха май пулса тăрать. Типĕтнĕ пахча çимĕçсемпе çĕрулмине типĕтес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин, СССР Суту-илÿ министерствин, Центросоюзпа Центропромсоветăн предприятийĕсенче типĕтнĕ пахча çимĕçсемпе çĕрулми туса кăларассине, 1953 çулта 46 пин тонна пулмалла пулсан, 1954 çулта 70 пин тоннăна тата 1955 çулта 100 пин тоннăна çитермелле, 1950 çулхипе танлаштарсан, 4,8 хут ÿстермелле.

66. Пахча çимĕçсене, симĕс пăрçана, улма-çырласене тата çырласене чĕрĕлле шăнтса хатĕрлессине хăвăрт ÿстермелле.

67. Пахча çимĕçсене, улма-çырласене тата çырласене чĕрĕлле шăнтса хатĕрлекен цехсем хăвартрах тăвас, хальхи холодильниксемпе тата консерва заводĕсемпе туллинрех усă курас тĕллевпе, холодильниксем (вăл шутра суту-илÿ организацийĕсен аллинчисем те) çумĕнче тата консерва заводĕсен çумĕнче асăннă цехсене тăвассине организацилемелле.

68. Ачасем валли консервăсем туса кăларассине чылай ÿстермелле: 1954 çулта, 1953 çулхипе танлаштарсан, йывăç улмипе çĕтрен тăвакан пиĕр (пюре), абрикос пиĕрĕ, симĕс пăрçаран, кишĕртен, хутаçлă фасольтен, шпинатран тата ыттисенчен тунă пахча çимĕç пиĕрĕ 4,5 хут ытларах, 1955 çулта—9 хут ытларах туса кăлармалла.

1954 çулта кăвăр ачисем валли тĕрлĕ апат-çимĕçе хутăштарса тунă типĕ продуктсем массăллăн туса кăларассине йĕркелемелле.

69. СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин консервăпа апат-çимĕç промышленность Главнăй управленийĕ енĕпе 1956 çул вĕçленнĕ тĕле, 1950 çулхипе танлаштарсан, предприятисен хăватне çак таварсене туса кăларас тĕлĕшпе ÿстермелле:

Улма-çырла тата пахча çимĕç консервисем	—	2,3 хут
Апат-çимĕç концентрачĕсем	—	1,2 хут
Типĕ апат	—	4,4 хут
Диэтăллă продуктсем	—	2 хут

Усă курма хатĕр тата пĕçерме хатĕрленĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларни килти хуçалăхра апат-çимĕç пĕçерес ĕçе çăмăллатать, çав ĕçе тума кирлĕ вăхăта кĕскетет, суту-илÿ культурине ÿстерет тата тавар илекенсен ыйтăвне тивĕçтерессине лайăхлатать. Усă курма хатĕр тата пĕçерме хатĕрленĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ÿстермелли заданине пурнăçлас тĕллевпе, çакăн пек тума кирлĕ тесе шутлас: халĕ ĕçлекен предприятисен хăватне пысăклатнипе пĕрлех, 1954—1955 çулсенче апат-çимĕç концентрачĕсем, сĕлĕ тата кукуруза хлопьи, апат консервисем, соуссем, приправа тата ытарласа ачасем валли продуктсем туса кăларакан çĕнĕ предприятисем тума тытăнмалла.

70. 1954—1956 çулсем хушшинче пысăк консерва заводĕсенче томатопродуктсем, симĕс пăрçаран, сахăр кукурузĕнчен консервăсем, томат тата улма-çырла сĕткенĕсем туса кăларас тĕлĕшпе технологи процесĕсене, çавăн пекех кĕленче савăт-сапана çăвас ĕçе пĕтĕмĕшпех механизацилемелле. Консервăсене автоматла тултаракан тата таварсене вискe чĕркекен машинăсемпе анлăрах усă курмалла.

Пысăк заводсенче улма-çырлан çурма фабрикачĕсене сулфитацилессине (малтанлăха консервлассине) пĕр татти-сыпписĕр механизациленĕ майпа тăвассине пурнăçламалла,

Улма-çырласене, çырласемпе пахча çимĕçсене хăвăрт шăнтма çĕнĕ йышши, хăвăрт шăнтакан аппаратсемпе, симĕс пăрçана виçсе картон коробкăсене хуракан автоматла машинăсемпе, çавăн пекех картон коробкăсене целлофанпа чĕркекен автоматсемпе производствăра усă курма тытăнмалла.

71. Ваккăн сутма 1954 çулта типĕтнĕ пахча çимĕçсен хутăшĕсем (борщсем, купăста яшки пĕçерме), çавăн пекех типĕтнĕ пахча çимĕçсемпе çĕрулмине брикетлесе, тивĕçлипе чĕркесе, туса кăларассине йĕркелемелле.

72. Кукуруза хлопьисем туса кăларма кирлĕ кукурузăн шурă кремнистăй сорчĕсене ÿстерес тата государствăна парас тĕлĕшпе колхозсене хавхалантарас тĕллевпе, СССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине çакăн пек тума ирĕк парас: 1954 çултан пуçласа кашни тонна шурă кремнистăй кукуруза панăшăн 1,5 тонна сарă е шурă, кремнистăй мар кукуруза панă шута е, çирĕплетнĕ эквивалент тăрăх, ытти тĕштырăсем панă шута кĕртмелле.

73. Консервăсене тата консервăсем тума хатĕрлекен пахча çимĕçсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра лайăх сыхласа усрама 1954—56 çулсенче консервă заводĕсем çумĕнче 200 миллион банка консерва усрама складсем тата 35 пин тонна пахча çимĕç вырнаçмалăх хранилищесем тумалла.

74. Витаминсем туса кăларассине чылай ÿстермелле. 1950 çулта 19,2 миллиард доза туса кăларнă, 1953 çулхи планпа 32,5 миллиард доза туса кăлармалла пулсан, витаминсем тăвассине 48 миллиард дозăна çитермелле.

Сăра, улма-çырла шывĕ тата квас енĕпе

75. 1954—1955 çулсенче сăра, улма-çырла шывĕ, минераллă шывсем тата квас туса кăларассине чылай ÿстермелле. Уйрăмах Донбасри, Уралти, Кузбасри районсенче чылай ÿстермелле, унта халăх ĕçмелли шывсем ыйтнине çителĕксĕр тивĕçтерессĕ. Асăннă шывсене туса кăларассине çакăн чухлĕ çитермелле:

	Миллионшар декалитрпа		1954 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 çулта	1955 çулта		
Сăра	210	232	163	181
Вăл шутра кĕленчесенче	73	109	3,4 хут	5 хут
Тутлă шывсем	110	135	153	187
Вăл шутра СССР, Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви енĕпе Вĕсенчен.	75	90	158	189
Улма-çырла шывĕ	43	50	185	2,2 хут
Çăкăр квасĕ	27	34	2,1 хут	2,7 хут
Вăл шутра кĕленчесенче	3,6	6	16 хут	темиçе вунă хут
Минераллă шывсем (миллионшар кĕленчепе)	220	260	2 хут	2,4 хут

76. Производство культурине ÿстерес тата сăра, квас, улма-çырла шывĕсемпе минераллă шывсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçсем туса иртт ермелле. Сăра тунă чухне лайăхрах технологипе усă курмалла, улма-çырла шывĕсем туса хатĕрленĕ чухне чĕртавар ямалли нормăна çирĕп пурнăçламалла тата пысăк пахалăхлă настойкăсемпе, сĕткенсемпе усă курмалла, холодильник установкисене анлăрах ĕçе кĕртмелле, сăра, улма-çырла шывĕсемпе минераллă шывсен, лимонадпа квас тунă тата вĕсене кĕленчесене тултарнă чухне технологилле инструкцисемпе санитари требованийĕсене çирĕп пурнăçламалла.

77. Çăкăртан туса кăларакан квас пахалăхне лайăхлатмалла,—ăна халăх авалтанпах ĕнтĕ юратса ĕçет. Çак тĕллевпе, квас хатĕрленĕ чухне пысăк пахалăхлă, шăлантарнă мраш салачĕпе, çăкăр продукчĕсемпе кăна усă курмалла.

78. Республикăсене, облаçсене, районсене-пăхăнса тăракан предприятисем тата кооперăпа предприятийĕсем туса кăларакан улма-çырла шывĕсемпе квассен пахалăхĕ чылай чухне начар пулнине тата СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин предприятийĕсен хăвачĕ çителĕксĕр е пачах çук районсенче те çак шывсене туса кăларма кирлине шута илсе, союзлă республикăсенчи Министрсен Совечĕсене, Центросоюза, Центропромсовета хăйсене пăхăнса тăракан улма-çырла шывĕсем тата квас предприятийĕсене техникăпа санитари тĕлĕшĕнчен мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухма, çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, улма-çырла шывĕсемпе квассен пахалăхне чылай лайăхлатас тата вĕсене туса кăларассине ÿстерес тĕлĕшпе кирлĕ мероприятисем туса хатĕрлесе вĕсене пурнăçа кĕртме хушас. Улма-çырла шывĕсемпе квассем туса кăларас ĕçе общественнăй апатлану предприятийĕсенче—столовăйсенче, ресторансенче организацилеме пур майсемпе те усă курмалла. Кунта улма-çырла шывĕсемпе квассем тĕлĕшĕнчен халăх ыйтăвне пĕтĕмпех тивĕçтерессине шута илни кирлĕ.

79. Сăрапа, улма-çырла шывĕсемпе, квaспа суту-илÿ тăвассине, вĕсене сивĕтсе тата пичкесенчен кружкăсене тултарнă чухне углекислотапа усă курнине, тĕпрен лайăхлатмалла. Çакăн пек тума кирлĕ ĕçсене 1954 çулта промышленность центрĕсенче, 1955—1956 çулсенче—ытти мĕнпур хуласенче туса ирттермелле.

80. 1956 çул вĕçленнĕ тĕле, 1950 çулхипе танлаштарсан, СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви енĕпе сăра туса кăлармалли хăвата 2,2 хут, минераллă шывсем туса кăларассине—3,7 хут, алкогольсăр шывсем туса кăларассине—4,1 хут, вăл шутран: улма-çырла шывĕсем туса кăларассине 4,5 хут, çăкăр квасĕ туса кăларассине 5,4 хут, салат туса кăларассине—2,7 хут ÿстермелле.

81. СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине минераллă шывсем, боржом, нарзан, ессентуки туса кăларассине татăклăн ÿстерме хушас.

Виноград эрехĕ, шампански, коньяксем, ликерсемпе шурă эрех енĕпе

82. 1954—1955 çулсенче виноград эрехĕсемпе коньяксем туса кăларассине çакăн чухлĕ ÿстермелле:

	Пин декалитрпа		1954 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа	1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, процентпа
	1954 çул	1955 çул		
Виноград эрехĕ	30.370	34.480	2,1 хут.	2,4 хут
Вăл шутран:				
Шампански эрех	1.370	1.480	129	140
е кĕленчепе (миллион)	18	20		
Коньяксем	1.200	1.500	2,9 хут	3,7 хут

83. 1954 çулта виноград тата улма-çырла эрехĕсене кĕленчесене тултарса кăларассине пĕтĕм эрех шутĕнче 90 процента çитермелле.

Эрехсемпе коньяксен пахалăхне малалла лайăхлатма кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

84. 1956 çул вĕçленнĕ тĕле, 1950 çулхипе танлаштарсан, çĕнĕ предприятисем туса лартнипе, хальхи заводсене çĕнетсе лайăхлатнипе тата аслăлатнипе эрех промышленносĕн предприятийĕсен хăватне виноград эрехĕсем туса кăларас енĕпе 2,7 хут, шампански эрехсем туса кăларас енĕпе—2,5 хут тата коньяксем туса кăларас енĕпе 4,6 хут ÿстермелле.

Эрехсен пахалăхне лайăхлатас, эрех материалĕсемпе хатĕр продукцине усранă чухне пулакан тăкаксене чакарас тĕллевпе СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине çĕнĕ подвалсем туса тата хальхи подвалсене аслăлатса эрех усрамалли вырăнсене чылай ÿстерме кирлĕ ĕçсем туса ирттерме хушас, вĕсене çĕнĕ техникăпа пуянлатмалла тата технологи режимĕсем кĕртсе пымалла.

Эрех завочĕсене чи малтан Мускав, Ленинград, Новосибирск, Хабаровск, Челябинск, Омск, Свердловск, Молотов, Саратов, Харьков, Днепропетровск, Минск, Кишинев, Курган-Тюбе хулисенче, шампански эрех завочĕсене—Свердловск, Хабаровск хулисенче тата Ростов облаçĕнчи Цимлянски совхозра туса лартмалла.

85. Шурă эрех тата ликерсемпе шурă эрех изделийĕсен пахалăхне лайăхлатас шутпа 1954—1956 çулсем хушшинче 40 градуслă эрехсемпе эрех изделийĕсене лайăх тасатнă тата иккĕмĕш хут ректификациленĕ спиртпа кăна туса кăларма тытăнмалла, çак эрехсене çурма шурă кĕленчесене, пысăк сортлă эрехсемпе ликерсене тата эрех изделийĕсене—çутă кĕленчесене кăна тултармалла.

Апат-çимĕç промышленносĕне сивĕтмелли техника кĕртсе пырас енĕпе

86. Продуктсен пахалăхне хăпартас, аш-какай, пулă, выльăх çăвĕ тата ытти апат-çимĕç таварĕсене сивĕре тытса хатĕрлемелли технологи ĕçĕсене лайăхлатас тата çак таварсене кирлĕ пек усрамалла тăвас тесе, холодильниксене пысăклатмалла, шăнтмалли вырăнсен хăватне ÿстермелле, СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине 1954—1956 çулсенче холодильниксен пысăккăшне, çĕнĕ холодильниксем тунипе тата хальхи холодильниксене çĕнетсе урăхлатнипе, вĕсене техникăпа пуянлатнипе, çĕнĕрен пĕр вăхăтрах 205 пин тонна продукци вырнаçмалăх туса çитерме хушас. Вĕсен пысăккăшĕ 1956 çул вĕçленнĕ тĕле 709 пин тонна вырнаçмалăх пулмалла,—1953 çул пуçламăшĕнче 460 пин тонна вырнаçмалăх пулнă. Çак тĕллевпе:

аш-какай, пулă, çу промышленносĕнче пухса хатĕрлекен пĕчĕк холодильниксемпе усă курнипе пĕрлех, пухса хатĕрлекен пысăк холодильниксемпе усă курассине вăйлатмалла. Çакăн пек туни кĕске срокра тата укçа-тенкĕ сахалтарах пĕтерипе холодильниксем тума май паратĕ;

1954—1956 çулсенче производствăллă холодильниксенче аш-какай, пулă тата ытти апат-çимĕç продукчĕсем шăнтса хатĕрлеме шăнтмалли вырăнсен тухăçлăхне талăка 10 пин тоннăлăха çитермелле:

производствăллă холодильниксемпе валеçсе тăракан холодильниксенче тата апат-çимĕç таварĕсен промышленность предприятийĕсенче аш-какай продукчĕсене, пуснă кайăк-кĕшĕк аш-какайне, пулăсене, пулăран тунă филесене, пельменьсене, улма-çырласене, пахча çимĕçсене тата ытти продуктсене те хăвăрт шăнтмалли аппаратсемпе усă курассине анлăн пурнăçламалла.

87. Çĕнĕ холодильниксем тунă чухне тата хальхи холодильниксене çĕнетсе урăхлатнă чухне сивĕтекен камерăсенче сивĕ тытмалли усăллăрах тата пысăк тухăçлă приборсемпе усă курмалла, сивĕтекен установкăсен управленине автоматизацилемелле, çавăн пекех автоматла контрольно-измерительнăй приборсемпе, сывлăша кислородпа пуянлатмалли установкăсемпе, сивĕне шута илсе тăракан счетчиксемпе усă курмалла.

88. Холодильниксемпе базăсенчен сивĕтнĕ тата шăнтнă апат-çимĕç таварĕсене суту-илÿ предприятийĕсене турттарса кайас ĕçе лайăхлатма 1954—1955 çулсенче промышленносăн центрсенчи холодильниксем çумĕнче авторефрижераторсенче усă куракан эроторсене тата сивĕ тытакан аккумуляторсене шăнтма зарядлă станцисем организацилемелле.

89. Машиностроени министерствине СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствипе пĕрле 1954—1956 çулсенче модернизациленĕ сивĕтмелли компрессорсем, автоматизациленĕ фреонла агрегатсем, типĕ пăр тумалли оборудовани, колбасасем, çусем, сĕт, эрехсем тата тутлă шывсем хăвăрт сивĕтме кирлĕ аппаратсем, абсорбциллă установкăсем, сивĕтмелли установкăсене автоматла ĕçлеттермелли управлени хатĕрĕсемпе аппаратсем тата вĕсем валли запаслă пайсем туса кăларас ыйтăва пăхса тухма хушас. Ку ыйту тăрăх хăйсен сĕнĕвĕсене пĕр уйăх хушшинче СССР Министрĕсен Советне тăратма хушас.

Папироссем тата парфюмерипе косметика япалисем енĕпе

90. Папироссемпе сигаретсем кăларассине 1954 çулта 200 миллиард штука çитермелле, 1950 çулхипе танлаштарсан, 1,6 хут ÿстермелле; 1955 çулта 215 миллиард штука çитермелле, 1950 çулхипе танлаштарсан, 1,7 хут ÿстермелле.

91. Табак промышленносăн предприятийĕсенче ĕç условийĕсене чылай лайăхлатас тата продукци пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе:

а) 1954 çулта табак фабрикисенче табака сывлăшпа кирлĕ чухлĕ нÿрĕлетме, ăна хĕснĕ сывлăшпа кăпкалатма тата тусанран тасатма май паракан технологин çĕнĕ схемине ĕçе кĕртсе çитермелле, 1954—1955 çулсенче сунăçллă табака хутăштарассине механизациленĕ майпа тăвассине йĕркелесе çитермелле;

б) 1954—1955 çулсенче табака ферментаци тăвакан заводсенче пуринче те табака ферментаци тăвас ĕçĕн технологилле процесне автоматизацилесе çитерес тесе сывлăшăн температурипе нÿрĕлĕхне кирлĕ пек тытса тăракан автомат-регуляторсене ĕçе кĕртмелле.

92. 1956 çул вĕçленнĕ тĕле, 1950 çулхипе танлаштарсан, табак промышленносĕн предприятийĕсене тата ферментаци тăвакан заводсене çĕнĕрен лартнипе, çавнашкалах халĕ ĕçлекеннисене çĕнетсе урăхлатнипе тата çĕнĕ техникăпа пуянлатнипе, папироссемпе сигаретсем туса кăларассине 1,6 хут тата табака ферментаци тăвас ĕçе 1,4 хут ÿстермелле.

Хатĕрлев пунктĕсенче тата табак фабрикисенче табакпа махорка чĕртаварĕсене сыхласа усрама 1954—1956 çулсенче складсем пĕтĕмпе 240 пин тăваткал метрлăх тумалла.

93. 1954 çулта пит çумалли супăнне мĕнпур ассортиментсем тăрăх халăх ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтерме кирлĕ чухлĕ кăлармалла. Уйрăмах çак супăнĕн пахалăхне, шăршине лайăхлатасси тата тулашне кирлĕ пек якатасси çине пăхмалла, пит çумалли чи паха сортлă супăне чĕркесе тата коробкăсем ăшне хурса кăларассине нумай ÿстермелле.

94. Ĕçсыннисем ытларах кăмăллакан чи паха сортлă духисемпе одеколонсем туса кăларассине, 1953 çулхипе танлаштарсан, 1954 çулта 2 хут тата 1955 çулта 2,5 хут ÿстермелле.

95. Чи паха тата вăтам сортлă духисемпе одеколонсем кăларас ĕçе йĕркелесе металран тата пластмассăран туса илемлетнĕ калпаксемлĕ савăтсем кăларассине ÿстермелле.

96. Пит çумалли супăне тата парфюмерипе косметика япалисене илемлетсе кăларассине лайăхлатмалла, çу тĕлĕшпе бронзăпа алюмини хутĕнчен тунă çĕнĕ илемлĕ этикеткăсемпе усă курмалла.

Парфюмерипе косметика промышленносĕне лайăх пахалăхлă ырă шăршлă синтетически япаласен çителĕклĕ парса тăма 1954 çулта Калуга хулинче çав япаласене тăвакан хăватлă комбинатăн иккĕмĕш черетне тума тытăнас, унта хăйĕн литографи никĕсĕ те пулмалла.

Мускаври «Новая заря» парфюмери фабрикине тата Ленинградри «Северное сияние» парфюмери фабрикине урăхлатса çĕнетес, вĕсенче уйрăмах хаклă йышши духисем, одеколонсем тата ытти тĕрлĕ парфюмери продукцийĕ туса кăлармалла тăвас,

II.

Апат-çимĕç таварĕсен промышленносĕне материалсемпе техника парса тăрасси тата укçа-тенкĕ хывасси çинчен

97. Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларас ĕçсене хăвăртрах механизацилеме тата автоматизацилеме пысăк тухăçпа ĕçлекен машинăсемпе автоматсем туса кăларассине чылай ÿстерме кирлĕ тесе шутлас.

Апат-çимĕç хатĕрлекен машинăсем тăвас енĕпе Машиностроени министерстви умĕнче 1954—1955 çулсенче тăракан тĕп задача вăл апат-çимĕç хатĕрлесе кăларма чылай лайăхлатнă тата тухăçлă ĕçлекен оборудовани туса кăларасси пулать, уйрăмах; пулăсем çурса тасатмалли, тултарса питĕрмелли автоматсем пуснă выльăха тирпейлемелли конвейер линийĕсем, колбаса тавраşĕсем тумалли ваккăн-ваккăн виçсе тултармалли тата чĕркемелли автоматсем, шуçран банксем туса кăлармалли оборудовани, сахăр промышленносĕ валли технологи оборудованин комплекчĕсем, усламçу, çăкăрпа булкăсем тата макарон изделийĕсем хатĕрлемелли потокла тата автоматла линисем, табак изделийĕсем хатĕрлемелли автоматсем туса кăлармалла.

98. Машиностроени министерствин СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви валли 1954 çулта 530 миллион тенкĕлĕх тата 1955 çулта 800 миллион тенкĕлĕх технологи оборудованийĕ туса памалла, апат-çимĕç машиностроени завочĕсен 1956 çул пуçланнă тĕле апат-çимĕç таварĕсен промышленносĕ валли 1.100 миллион тенкĕлĕх оборудовани туса кăлармалла.

99. Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленносăпа тата суту-илÿ организацийĕсене апат-çимĕç таварĕсене ваккăн-ваккăн виçсе чĕркеме тата тултарма кирлĕ тĕрлĕ япаласем, хут тата картон пачах çителĕксĕр панине тÿсме çук тесе шутлас.

Продовольстви таварĕсен пахалăхне тата ассортиментне лайăхлатас, ваккăн виçе-виçе чĕркесе хунă тата илемлĕн чĕркенĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăртрах ÿстерес, çавнашкалах çав таварсемпе суту-илÿ тăвас культурăна лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пурнăçлама ятарласа уйрăм сортлă хутпа картон туса кăларассине чылай ÿстерме кирлĕ тесе шутлас.

100. СССР Вăрмана хут промышленность министерствине апат-çимĕç таварĕсен промышленносĕпе суту-илÿ организацийĕсене кирлĕ сортлă хутпа картон туса кăлармалли производство хăвачĕсене 1957 çул вĕçленнĕ тĕле, 1953 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ÿстерме хушас.

101. Апат-çимĕç таварĕсен пахалăхна чакармасăр сыхласа усрама, производство культурине ÿстерме тата хитре чĕркемелли материалсем—фольга тата целлофан кирлине шута илсе, çапла тума хушас:

а) Металлурги промышленность министерствин апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан министерствăсемпе ведомствăсене алюминирен фольга туса парассине чылай ÿстермелле.

Тĕрлĕ тĕслĕ тата тĕрлĕрен фольга туса кăларассине ÿстермелле;

б) СССР Куллен кирлĕ таварсен промышленность министерствин апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан министерствăсемпе ведомствăсем валли тата суту-илÿ валли те целлофан чылай ытларах парса тăмалла.

Целлофан пахалăхне нумай лайăхлатмалла, тĕрлĕ тĕслĕ, шыв яман тата лакпа сăрланă целлофан туса кăлармалла.

102. Апат-çимĕç таварĕсен промышленносĕпе тата суту-илÿ организацийĕсене йывăç ещĕксемпе катка-пичке çителĕксĕр парса тăнине, нумай чухне вĕсен пахалăхĕ çителĕксĕр пулнине, çав вăхăтрах хăйне ларакан хакĕ пысăккине шута илсе, СССР Госпланĕпе СССР Вăрманпа хут промышленность министерствине пĕр уйăх хушшинче йывăç ещĕксемпе катка-пичке туса кăларассине ÿстересси, пахалăхне лайăхлатасси тата хăйне ларакан хакне чакарасси çинчен сĕнÿсем хатĕрлесе, пăхса тухма тăратма хушас,—ку ĕçе тунă чухне апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленносăпа суту-илÿ валли йывăç ещĕксемпе катка-пичке çителĕклĕ туса памалла асра тытмалла.

103. Апат-çимĕç таварĕсен промышленносĕ чĕртавар, материалсем, топливо, электроэнерги тата оборудовани çителĕклĕ тата пĕр татăксăр парса тăмалла. Çак ĕçсене тума хушас:

а) СССР Госпланĕн СССР халăх хуçалăхне 1954—1955 çулсенче аталантармалли плансен проекчĕсене тунă чухне çакна палăртса хумалла:

кăлартса панă чухлĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларма чĕртавар, фондлă материалсем, топливо тата электроэнерги парса тăрассине;

апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан отраслĕсене апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленносăн производство хăвачĕсене ÿстерес пымалли плансем тăрăх укçа-тенкĕ, оборудовани тата строительство материалĕсен парса тăрассине палăртса хумалла;

б) министерствăсен, ведомствăсен, республикăсен Министрĕсен Совечĕсен пурин те чĕртаварпа материалсен фончĕсене уйăрăм предприятисене валеçсе панă чухне çав материалсене пуринчен малтан апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисене парассине пурнăçласа пымалла;

в) министерствăсен-поставщиксен апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисене чĕртаварпа оборудовани, ытти потребительсене памалли плана тултарнине пăхмасăр, чи малтан памалла тата чĕртаварпа оборудовани памалли плана пĕтĕмпех тултарса çитермелле.

104. Электростанцисемпе электропромышленность министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене çапла тума хушас: электроэнерги валеçмелли плансенче апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисене электроэнерги çителĕклĕ парса тăма палăртса хумалла, предприятисене электричество мĕн чухлĕ расходламалли лимит памалла, электроэнерги пĕрмаях парса тăмалла, электроэнерги лимит чухлĕ парса тăрасçĕ пулсан, электроэнерги парса тăрассине чарса лартма е чакарма юрамасть: апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисенче хушса тăвакан трансформаторсене чи малтан ĕçе кĕртмелле.

105. Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерес задачăна пурнăçлама кадрсем хатĕрлессине лайăхлатмалла тата апат-çимĕç промышленность таварĕсем тăвакан предприятисемпе организацисене специалистсем çителĕклĕ уйăрса пама кирлĕ ĕçсем туса ирттермелле, тесе шутлас.

СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин предприятийĕсенче, стройкисенче тата организацисенче кадрсем çителĕклĕ пулмалла тăвасси çинчен СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствипе СССР Культура министерстви хатĕрленĕ мероприятисене çирĕплетес.

106. СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствин производство хăвачĕсене ÿстерме 1953 çулта 4,8 миллиард тенкĕ хывмалла пулсан, 1954 çулта çак ĕç валли 8,5 миллиард тенкĕ памалла тăвас (ку шута çăнăхпа пĕрпе авăртакан тата комбикорм промышленносĕ те кĕрет).

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленность предприятийĕсенче, строительство ĕçĕсене тума палăртнă районсенчи организацисен вăйĕпе, строительство ĕçĕсене чылай пысăклатни кирлĕ, тесе шутлас.

107. Укçа-тенкĕ ытлашши нумай пĕтермесĕр апат-çимĕç таварĕсем тăвакан промышленносăн хăвачĕсене хăвăрт ÿстерсе пымалла пултăр тесе, СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине, республикăсен Министрĕсен Совечĕсене, облисполкомсене, хула Совечĕсен исполкомĕсене, асăннă предприятисен директорĕсемпе главнăй инженерĕсене, кашни предприятире ĕçе механизацилемелле, хĕсĕк вырăнсене пĕтерипе, юрăхлă суртсене аслăлатнипе тата юсанипе, производство хăвачĕсене ÿстермелли, апат-çимĕç таварĕсем ытларах туса кăлармалли майсене 2 уйăх хушшинче палăртса хатĕрлеме тата çирĕплетме хушас,—ку ĕçе тунă чухне рабочисен тата инженерсемпе техниксен рационализаторла сĕнĕвĕсемпе анлăн усă курмалла.

108. СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине, Центросоюза, Центропромсовета тата республикăсен Министрĕсен Совечĕсене апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисенче продукцин хăйне ларакан хакне чакармалли, чĕртаварпа хатĕр продукци ахаль пĕтнине сахаллатмалли, накладной расходсемпе ытти расходсене пĕчĕклетмелли майсене палăртма тата çав ĕçсене пурнăçлама хушас.

* * *

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерессине совет, парти тата профсоюз органĕсем пурте ĕçлесе пурнăçламалли пит кирлĕ задачăсенчен пĕри пулать, тесе шутлаççĕ тата министрсене, ведомствăсен руководителĕсене, союзлă республикăсенчи Министрсен Совечĕсен председателĕсене тата Коммунистсен партийĕсен Центральнăй Комитечĕсен секретарĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсен председателĕсене тата партин крайкомĕсемпе обкомĕсен секретарĕсене халăх валли апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине хăвăрт ÿстерес, çĕршывра апат-çимĕç нумай пулмалла тăвас тĕлĕшпе промышленность умне кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлама апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан предприятисене пулăшса пыма, 1954, 1955 тата 1956 çулсенчи хуçалăх планĕсенче çак постановлени пурнăçламалли ĕçсене палăртма хушаççĕ.

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларакан промышленность предприятийĕсемпе организацийĕсенчи мĕнпур работниксен тивĕçĕ промышленность ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерессипе, çак постановленипе кăлартса панă задачăсене пурнăçласа тата ирттерсе пурнăçлас—апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине чылай ÿстерес, вĕсен пахалăхне лайăхлатас, производство культурине ÿстерес, çапла вара сывлăх ÿсекенсем пирĕн çĕршывра пит нумай апат-çимĕç таварĕсем нумай пулмалла тăвас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлесси пулать.

Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ ĕçне малалла тăсать

ВЕНА, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ октябрĕн 28-мĕшĕнче пулнă ларура ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисене чĕнсе каланине йышăннă. Чĕнсе каланинче çапла каланă:

«Капитализмăн монополийĕсен ĕççыннисен массисем [illegible] хытă тăраççĕ. Çавна кура эпир, капиталистсем, [illegible] колонилле çĕршывсенчи ялхуçалăхĕнчи рабочисемпе хресченсем, эксплуатацине пуçмăр тусе пурăнакансем, хамăрăн экономикăлла тата социальнăй требованисене пурнăçа кĕртессишĕн, демократилле тата профсоюз ирĕклĕхĕсемшĕн кĕрешме хатĕр тăнине палăртатпăр.

Хамăрăн пурнăç интересĕсемшĕн планпа [illegible], вăрман хатĕрлевĕнче, ялсенче вĕрешсе, эпир, рабочисемпе хресченсем, çак вăлăтрах эпир çĕршывсене экономикăпа социальнăй енĕпе аталантарассишĕн, ниçта никама пăхăнманлăхĕшĕн тата пĕтĕм халăхсем хушшинчи миршĕн кĕрешетпĕр.

Эпир халăхсен пурнăçне лайăхлатас тата малалла кайса ывакан СССР-ти, Китайри тата халăх демократи çĕршывĕсенчи рабочисемпе хресченсене, нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн, миршĕн паттăррăн кĕрешекен Вьетнампа Малайăри рабочисемпе хресченсене саламлатпăр.

Юсам тăвансем!

Эпир, çынсем валли апат-çимĕç хатĕрлес ĕçре ĕçлекенсем, тенех чухăн тата выçă пурăнасшăн мар, ĕçсĕрлĕх асапне тÿсесшĕн мар; эпир хамăрăн пурнăçпа ĕç условийĕсене лайăхлатасшăн тăратпăр. Ниçта мир кирлĕ.

Эпир çакна шанса тăратпăр: мирлĕ майпа татса пама пултарайман пĕтĕм тĕнчери тавлашуллă ыйтусем çук.

Сăварпшăн, çĕршĕн, ирĕклĕхпе миршĕн ыраскан кĕрешÿ [illegible] пуласси хамăртан, хамăр пĕрлешсе ĕçленинчен, хамăрăн сыхлăхран килет, промышленносри рабочисемпе тата халăхăн мĕнпур прогрессивлă вийĕсемпе çирĕп союзлă пулса, эпир монополистсен ултавлă ĕçĕсене чарма пултаратпăр. Монополистсем пĕтĕм тĕнчери çивĕч лару-тăрăва сыхлас [illegible] Японие хĕçпăшалланатарасшăн, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парасшне пĕтерсе лартасшăн, малалла та вăрçă хĕçпăшал хатĕрлесшĕн, ĕççыннисен массисене малашне те хаяррăн эксплуатацилесшĕн.

Эпир профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕн решенийĕсене хÿтĕлĕн ыратпăр».

Возвани ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисене пĕрлешме, демократилле тата профсоюз прависемпе ирĕклĕхĕн вĕрешме, уçă паракан социальнăй обеспечени тăвассишĕн, демократилле çĕр реформишĕн кĕрешме чĕнет.

ВЕНА, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ ĕнер хăйĕн ĕçне вĕçленĕ.

Каçхи ларура конференцире пулнисем пĕр кăмăллă пулса мĕнпур çĕршывсенчи ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисене чĕнсе калание, çав профессиллĕ ĕççыннисен экономикăлла тата социальнăй требованисен программине, çавăн пекех ятласе ертсе явнă докладсем тăрăх хресченсен прависемпе требованийĕсен Хартине йышăннă. Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен профсоюзĕн Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн исполнительнăй органĕсене колонилле тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи ялсенчи ĕççыннисен пурнăçĕ çинчен меморандум çырса хатĕрлеме, çав меморандума Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ урлă ООН-ăн экономикăпа социальнăй советне яма хушнă.

Ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисен профсоюзĕсен Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвне Пĕтĕм Индири хресченсен союзне илнĕ. Çакна конференцире пулнисем тăвăллăн алă çупса ырланă.

Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешÿ председателĕ пулма конференци Индонезири профсоюзсен центрĕн председательне, Индонези парламенчĕн членне Тжугитона суйланă. Генеральнăй секретарь пулса ĕçлеме Илио Бозине (Итали) суйланă.

Конференци вĕçĕнче Тжугито тухса каланă. Эпир, тенĕ вăл, требованисен программине туса хатĕрлерĕмĕр. Вăл программăра ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи миллионшар ĕççыннисен кĕрешĕвĕн опытне пĕтĕçтернĕ. Унта ĕççыннисен пурнăç интересĕсене, демократие, нацин никама пăхăнманлăхне тата пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлессишĕн малашне туса пымалли кĕрешĕвĕн тĕп тапхăрĕсене палăртнă.

Конференцире пулнисен доклачĕсем тата тухса каланисем, тенĕ Тжугито, çакна кăтартса пачĕç: ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисем промышленносри рабочисемпе пĕрлешсе ĕçлесси ÿссе, сарăлса пырать. Америка империалисчĕсем ертсе пыракан реакци террорĕпе хĕсĕрленине, прогрессивлă çынсене вĕлернипе асаплантарнине пăхмасăр, ку пĕрлĕх аталанса тата пĕрекленсе пырĕ, вăл çĕнтерÿ патне илсе çитерĕ.

Пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн административлă комитечĕ ячĕпе Тжугито ялхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнчи ĕççыннисене хăйсен кĕрешÿри пĕрлĕхне тата хуласемпе ялсенчи ĕççыннисен вĕсен чи кирлĕ требованийĕсемшĕн пыракан кĕрешÿри пĕрлĕхне çирĕплетме чĕнсе каланă.

Китайра çĕр кăмрăк промышленноçĕ аталанать

ШАНХАЙ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Вэньхуэйбао» хаçат Китайри çĕр кăмрăк промышленноçĕ аталанни çинчен статья пичетлесе кăларнă. Статьяра çапла каланă: çĕршыва ирĕке кăларичченех, çĕр кăмрăк шахтисен империалистсен аллинче пулнă чухне, çĕр кăмрăкне «сахал укçа тăкакласа расходласа чи нумай усăлă илмелли» йĕрпе тăрăх кăларнă. Шахтăсенче рабочисене хаяррăн эксплуатациленĕ, çĕр кăмрăкне алă вăйĕпе кăларнă.

Çĕршыва ирĕке кăларнă хыççăн, çĕр кăмрăк промышленноçĕ, тĕпрен илсен, государство аллине куçнă. Çĕр кăмрăк кăларас ĕç те çĕнелсе улшăннă. Шахтăсенче Совет Союзĕнчи ĕç меслечĕсемпе усă курма пуçланă, çĕр кăмрăк кăларасси лайăхланнă, ĕçсене механизацилесси ÿснĕ. Шахтерсен ĕç условине лайăхлатма тăрăшаççĕ.

1949 çулта кăларнă çĕр кăмрăкне 100 процент шутласан, 1950 çулта çав цифра 132, 1951 çулта—164, 1952 çулта вара 202 çитнĕ. Ку вăл 1943 çулхи шая çитни пулать. Çав çулхине çĕр кăмрăкĕ нихçанхинчен ытларах кăларнă пулнă.

Пилĕк çуллăх план тăрăх палăртнă задачăсенчен пĕри çĕр кăмрăк промышленноçне малалла аталантарасси пулать.

Халĕ, тесе çырать хаçат, çĕршыври 100.000 шахтер ытла кăмрăк кăлармалли çулталарри планран ирттерсе 810 пин тонна кăмрăк кăларассишĕн социализмла ăмăрту сарса янă. Ăмăртăва хутшăннă шахтерсем 169 миллиард юань укçа перекетлеме обязательство илнĕ.

Октябрь уявĕ ячĕпе

СОФИЯ, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири ĕççыннисем Октябрьти Социализмла Аслă революцин 36 çул тултарнине ситĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ. Уяв ячĕпе нумай фабрикăсен, рудниксен коллективĕсем ситĕнÿсем тунине хаçатсем кунсерен палăртаççĕ.

Димитровградри Сталин ячĕпе тăракан химикăлла комбинатĕнчи рабочисем пысăк ÿсĕм. сем тунă. Кăçалхи вунă уйăхри плана комбинат 127 процент тултарнă. Совет новаторĕсен Левченкопа Мухановăн меслечĕсемпе усă курса, комбинат коллективĕ 22 миллион лев ытла перекетленĕ. Планран ирттерсе 10.782 тонна азотлă удобрени тата 2.012 тонна кÿкĕрт кислоти туса кăларнă.

Габрово, Кырджали, Свиштов тата республикăри ытти хуласенчи чылай предприятисем те Октябрь уявĕ умĕн илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлаççĕ.

Совет культурин деятелĕсен делегацийĕ Румынире

БУХАРЕСТ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ ячĕпе Румынине совет делегацийĕ пынă. Делегаци членĕсем Румынири рабочисемпе, хресченсемпе, наукăпа культура деятелĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Киеври «Красный экскаватор» заводри токарь, Сталинла премин лауреачĕ В. Семинский ĕнер Тырговишт хулинчи Георгиу Деж ячĕпе тăракан заводра пулнă. Заводри механически цехра вăл 500 рабочипе инженер тата техник умĕнче металла хăвăрт майпа касса якатнă. Совет Союзĕнчи токарьсем çак меслетпе усă курса тунă ситĕнÿсем çинчен каласа панă.

В. Семинский çавăн пекех Бухарестри, Сталин хулинчи, Решица, Плоешти хулисенчи металран япаласем тăвакан предприятисенчи рабочисемпе тĕл пулнă.

Делегаци членĕ—Социализмла Ĕç Геройĕ Шкурко агроном тата Пĕтĕм Союзри вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ Кузнецов государственнăй тата коллективла çĕрĕç хуçалăхĕсенче, наукăн ялхуçалăх учрежденийĕсенче пулнă. Унта вĕсем Совет Союзĕнчи колхозсен опычĕ çинчен, совет зоотехника наукин тунă ситĕнÿсем çинчен каласа панă.

Делегаци руководителĕ—СССР Культура министерствин представителĕ Прокофьев тата СССР Наука академийĕн членкорреспонденчĕ Спицын Румынин ученăйĕсемпе, Бухарест, Клуж, Яссы тата Тимишоара хулисенчи аслă шкулсенчи преподавательсемпе тата студентсемпе тĕл пулнă. Вĕсем СССР-ти аслă вĕренÿ тата совет наукин тунă ситĕнÿсем çинчен лекцисем вуласа панă.

Делегаци членĕ—РСФСР халăх артистки С. Гиацинтова та темиçе хутчен Румынири искусство работникĕсемпе тĕл пулнă.

РУМЫНИРЕ ĔÇÇЫННИСЕМ ÇУРТСЕМ ЛАРТАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕ ĕççыннисене харпăр хăй тĕллĕн çуртсем лартма пысăк пулăшу парать. 1952—1953 çулсенче çак ĕç валли 120 миллион лей расходланă. Шахтерсем, нефтяниксем, металлургсем, йывăçран япаласем тăвакан промышленносри рабочисем, ялхуçалăхĕнчи рабочисем хăйсем валли çуртсем лартаççĕ.

Хальхи вăхăтра Сталин хулин районĕнче ĕççыннисем 175 çурт, Бакэу таврашĕнче—120 çурт, Плоешти облаçĕнче 300 çурт ытла тăваççĕ. Хунедоарти Георгиу Деж ячĕпе тăракан металлурги комбинатĕнчи рабочисемпе техниксем те хăйсем валли çуртсем лартаççĕ.

Пуэрто-Рикăн никама пăхăнманлăхĕшĕн

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Гарлемра митинг пулса иртнĕ. Митингра пулнисем Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви Пуэрто-Рикăна «хăйĕн управленийĕ пур» территори пулса тăчĕ, çавăнпа та Пĕрлешÿллĕ Штатсем Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине ку çĕршывра лару-тăру çинчен текех пĕлтерсе тăма тивĕçлĕ мар тесе пĕлтернине хирĕç протестленĕ. Митингра 2 пин çын пулнă.

Митингра «Пуэрто-Рикăн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿ» партийĕн председателĕ Консепсьон де Гарсиа сенатор тухса каланă. Сенатор Пĕрлешÿллĕ Штатсен ООН-ри делегацине вăл ытти колонилле çĕршывсен делегацийĕсемпе пĕрле Пуэрто-Рикăпа ытти колонисем чăн-чăн никама пăхăнманлăх илессишĕн тăрăшнине хирĕç тăнăшăн сивленĕ. Де Гарсиа США делегацийĕн тĕллевне Совет Союзĕн делегацийĕ, халăх демократи çĕршывĕсен делегацийĕсем, çавăн пекех араб çĕршывĕсенчи делегацисем мĕнле тĕллев тытнипе танлаштарнă. Вăл делегацисем Пуэрто-Рикăра никама пăхăнманлăхшăн пыракан юхăмăн руководителĕсен ООН Генеральнăй Ассамблейинче опека тĕлĕшпе ĕçлекен комитетра тухса калама право пур тесе, çав руководительсем майлă тăраççĕ.

Де Гарсиа çапла каланă: колонилле державăсем демократие «хÿтĕлеççĕ» тесе çирĕплетсе каласан та, вĕсем пĕтĕмпех ирĕке тухассишĕн кĕрешекен колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи тискер майсемпе усă кураççĕ.

Де Гарсиа Пуэрто-Рикăри йывăр пурнăç çинчен каланă. Пуэрто-Рикăра 200 пин çын нимĕнле ĕç те тупаймаççĕ, пиншер ачасем туберкулезпа вилеççĕ, халăхăн пысăк пайĕ выçă пурăнать.

Юлашкинчен де Гарсиа Америка халăхĕпе ытти çĕршывсенчи халăхсене вĕсем Пуэрто-Рикăна чăннипех никама пăхăнманлăх пама требовани лартчăр тесе чĕнсе каланă.

Митингра ытти ораторсем те тухса каланă. Вĕсем Нью-Йоркра пуэрторикăнецсене тан мар тесе шутласа, пусмăрласа хĕсĕрлекен политика тытнине сивленĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер 100 çын ытла Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн штаб-хваттерĕн çуртне хупăрласа илнĕ. Вĕсем Пуэрто-Рикăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен организацисен представителĕсене ООН-ра тухса калама, США Пуэрто-Рико текех колони мар, тесе çирĕплетсе каланине сирсе яма ирĕк пама требовани лартнă.

Пикета хутшăннисем плакатсем çĕклесе пынă. Плакатсем çине—«Пуэрторикăнецсем хăйсене никама пăхăнманлăх пама требовани лартаççĕ», тесе çырнă.

Лисынмановецсемпе гоминдановецсен тискерлĕхĕ

ПЕКИН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Индин хуралта тăракан çарĕсен командованийĕ Корейăпа Китайăн тыткăна лекнĕ темиçе çар çыннине лисынмановецсемпе гоминдановецсен агенчĕсем вĕлерни çинчен пĕлтернĕ.

Индин хуралта тăракан çарĕсем пĕлтерниче çапла каланă: Корейăн тыткăна лекнĕ пĕр çар çыннине çакса вĕлернĕ, тепĕр çар çыннине виличченех хĕненĕ, виççĕмĕшне выçă усраса вĕлернĕ. Китайăн тыткăна лекнĕ пĕр çар çыннине пăвса вĕлернĕ.

Корейăпа Китай представителĕсем çакăн пек требовани лартнă: репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен нейтральнăй комиссин лисынмановецсемпе Чан Кай-ши агенчĕсем тунă тискер ĕçсене тĕплĕн тĕпчесе тухмалла. Корейăпа Китай представителĕсем комиссине свидетельсем тупса пама хатĕр пулнине палăртнă. Свидетельсем вĕлернĕ çынсене ăста пытарнине кăтартма тата çынвĕлерекенсене палласа илме пултараççĕ. Анчах комисси тата Индин хуралта тăракан çарĕсем тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсенчи террора пĕтерес, тыткăна лекнĕ çар çыннисене киле кайма ирĕк парас тĕлĕшпе нимĕн те туман-ха.

Непалра Англин колони çарĕ валли салтаксем пухаççĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерничен çакă паллă: çак кунсенче Меорихвальре (Непалăн хĕвеланăç пайĕ) гуркхсене Англин колони çарне илмелли пункт ĕçлеме пуçланă. Вăл çар Малайăри нацин ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен отрядсене хирĕç вăрçă вăрçать.

Ĕлĕкрех акăлчансем гуркх салтакĕсене Инди территорийĕнче вырнаçнă пунктсем урлă пухнă. Çак ĕçе хирĕç Инди общественноçĕ татăклăн протестленĕ. Çавна пула Инди влаçĕсем Англипе Непала Инди территорийĕнчи салтаксем пухмалли пунктсене хупасси çинчен пĕлтернĕ. Ун хыççăн акăлчансем Непалпа килĕшÿ тунă. Вăл килĕшÿ тăрăх, акăлчансем гуркхсен саккăр батальонне салтаксем ситĕлĕклĕ тăран парса тăрас шутпа, пилĕк [illegible]ушши кашни çулах пин салтава [illegible] пухмалла.

Непалри пĕрлешÿллĕ лига,—ун[illegible] политикăлла, обществăлла, студентсемпе хĕрарăмсен организацийĕсем пурĕ 20 кĕреççĕ,—çакна паллă тăвать: «Империализмла держава Непал ывăлĕсемпе Малайăн[illegible]тăр халăхĕн нацилле кĕрешĕвне путарас ĕçре усă курать. Вĕсене çапа илни пĕтĕм халăхшăн мăшкăл пулса тăрать».

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ çар çыннисене килĕсене янă

БЕРЛИН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Правительствипе Демократилле Германи Республикин Правительстви кăçалхи август уйăхĕнче Мускавра калаçса татăлнă тăрăх, юлашки вăхăтра Совет Союзĕнчен Берлина нимĕçсен тыткăна лекнĕ çар çыннисем пырса çитнĕ. Çав тыткăнри çар çыннисене вĕсем вăрçă вăхăтĕнче тунă преступленисемшĕн айăпланă пулнă, халĕ вĕсене ирĕке кăларнă. Берлина пурĕ 5.374 салтакпа офицер пырса çитнĕ. Килĕсене таврăнакан çар çыннисем хушшинче темиçе генерал пур.

Америка оккупацине пула

Кăнтăр Корейăра ерекен чирсем сарăлнă

ПХЕНЬЯН, октябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Корейăра туберкулез, энцефалит (пуç мимми шыçни), тÿрленейми юхан-суранлă ерекен чир хытă сарăлнă. Кăнтăр Корейăн Тоньян Тхонсин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Корейăра туберкулезпа чирлекенсем 1.300.000 çын шутланаççĕ. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 300.000 çын ытларах.

Юлашки вăхăтра тÿрленейми юхан-суранлă чирпе чирлекенсен шучĕ питĕ нумай ÿснĕ. Чирлекенсем уйрăмах Кăнтăр Кенсан, Çурçĕр тата Кăнтăр Чолла провинцийĕсенче нумай. Хальхи вăхăтра Кăнтăр Корейăра энцефалит чирĕ алхасать. Кăнтăр Корейăн Хабтон Тхонсин агентстви çакна йышăннă: ачасем вилнине илсен, Кăнтăр Корея тĕнчере пĕрремĕш вырăнта тăрать.

Эрнст Тельман çинчен кинофильм ÿкереççĕ

БЕРЛИН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Демократилле Германи Республикин «ДЕФА» киностудийĕ «Эрнст Тельман» ятлă кинофильмăн пĕррремĕш пайне ÿкерсе пĕтерет. Фильм нимĕç рабочи класĕн ĕçĕшĕн кĕрешнĕ мухтавлă çыннăн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен каласа парать.

США-ра ĔÇСĔРЛĔХ ÿСЕТ

ВАШИНГТОН, октябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Вашингтона Çĕнĕ Англи штачĕсенчен электропромышленносри рабочисен профсоюзĕн 70.000 членĕ янă представительсем пынă. Вĕсем «ÿссе пыракан ĕçсĕрлĕхе хирĕç, çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи штатсенче экономика вăйсăрланса çынине хирĕç» правительство мерăсем йышăнтăр тесе требовани лартаççĕ.

Электропромышленносри рабочисен профсоюзĕн председателĕ Кэри çапла пĕлтернĕ: Çĕнĕ Англи штачĕсенчи электро, радио тата машинăсем тăвакан промышленносри рабочисен пурнăç условийĕсем начарланнă пирки, делегаци умне лартнă задача васкавлă пурнăçламалли задача пулса тăрать. Рабочисене хальхи пекех ĕçрен кăларса пырсан, Çĕнĕ Англи штачĕсенче 200 пин ытла рабочи ĕçсĕр тăрса юлаççĕ, тенĕ Кэри.

КИНО

„Карапсем бастионсене штурмлаççĕ"

Республикăри кинотеатрсемпе клубсенче «Мосфильм» ÿкерсе кăларнă «Карапсем бастионсене штурмлаççĕ» ятлă кинокартина кăтартма тытăнчĕç. Çак нумай тĕсĕ пайлă та илемлĕ картина вырăссен аслă флотоводецĕ Федор Федорович Ушаков адмиралăн пурнăçĕпе, унăн пĕтĕм тĕнчипе паллă тухнă паттăр ĕçĕсемпе паллаштарать.

Кино куракансем «Адмирал Ушаков» ятлă картинăна лайăх астăваççĕ, вĕсем ăна хавасла та пысăк кăмăлпа йышăнчĕç. Çав картина вырăс флотĕпе Ушаков пурнăçĕнчи 1780—1791 çулсенчи ĕçсем çинчен каласа панăччĕ. «Карапсем бастионсене штурмлаççĕ» фильм малтанхи кинокартинăн иккĕмĕш пайĕ, çав вăхăтрах хăйне уйрăм илемлĕ фильм пулса тăрать.

Ушаков адмирал вырăс халăхĕн çулĕн [illegible] паттăрĕ. Хура тинĕс çинче вырăссен парусла флотне пуçарса [illegible] пĕри пулнă. Вăл çĕнĕ тактика, хăвăрт маневрсем туса, тăшман флотне кĕтмен çĕртен пырса çапăççан çиччен вĕрентнĕ. Ушаков хăйĕн ĕмĕрĕнче, вырăс çар флочĕ карапĕсене аслăн [illegible] пырса, тăшмансен çар флотне вунсакăр хутчен çапса аркатнă, хăй вара вăл пĕр çапăçура та парăнман, хăйĕн мухтавлă ятне ниçта та çĕре ÿкермен.

Ушаков адмирал вырăссен çаранне часчасах тапăнакан туроксен флотне—Европăра чи вăйлă шутланнă флота çапса çĕмĕрнĕ, вăл, вырăс çар карапĕсемпе Вăтаçĕр тинĕсе паттăррăн ишсе çитсе, Ионически утравсене француз çарĕсен пусмăрĕнчен хăтарнă.

Аслă флотоводец Ушаков аслă полководецăн Суворовăн вĕрене кенĕ, сывăх тусĕ пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те çар ĕçĕ çине çĕнĕлле, новаторла пăхнă, çар ĕçĕнчи кивĕ йĕркесене, юрăхсăра тухнă меслетсене пăрахăçа кăларса пынă. Тăшмана кĕтмен çĕртен, хăвăрт маневрсем туса сасартăк пырса çапассине Ушаков Суворовран вĕреннĕ. Акăлчансен адмиралтействи линейнăй бой тукан тактикăна хăтма вырăнне хурса йышăннă пулсан, Ушаков хăйĕн маневрла çапăçăвĕсемпе çав вĕрентĕве сунса, юрăхсăра кăларнă.

Çĕнĕ фильм Ушаковăн паттăр сăнарне, унăн таланчĕ ÿссе, пысăкланса пынине чăннипех те маттурăн фильмран нумай лайăхрах кăтартнă.

Акă экран уçăлать. XVIII-мĕш ĕмĕр вĕçĕ. Наполеон Бонапарт çарĕ, Европăна майĕпен çаклатса илсе, халаллăх куçса пырать, пĕр патшалăх хыççăн теприне пĕхăнтарать. Французсен флочĕ акăлчансен пăхăнтарса тăракан Мальта тата Ионически утравсене туртса илет. Çакăн пирки Англин тĕп хулинче—Лондонра—кулянма тытăнаççĕ. Акăлчансем вырăс патшинчен—Пĕрремĕш Павелтан — пулăшу ыйтма тытăнаççĕ, вĕсем вырăссемпе туроксен карапĕсенчен пĕр эскадра туса, ăна хăвăртрах Вăтаçĕр тинĕсе ăсатма сĕнеççĕ. Акăлчансем те, туроксем те эскадра командирĕ пулма Ушакова хушасшăн. Туроксем унăн хăвачĕпе пултаруллăхне пĕрре мар туйса илнĕ ĕнтĕ. Патша килĕшет, Ушакова курайманскер пулин те, ăна эскадра пуçлăхĕ тăвать.

Эскадра часах çитес çĕре çитет Ионически утравсене пĕрин хыççăн теприне хăтарма тытăнать. Акăлчансем халĕ ĕнтĕ вырăс флотĕнчен сехĕрленме тытăнаççĕ: вĕсем вырăссем Вăтаçĕрти тинĕс утравĕсем çинче вăй илесрен, тĕреклене юласран хăраççĕ. Ушаков çакна часах тавçăрса илет, вара Ионически утравсене пĕтĕмĕшпех хăй ирĕке кăларать, французсене—çапăçуран юлнă пеккисене—хăваласа ярать.

Ушаков флот пуçлăхĕ çеç мар, чăнчăн пысăк чун-чĕреллĕ çын пулнă. Каласса та вăл кăмăллă каласать, хăйне хăй тыткаласса та сăпайлăн та тивĕçлĕн тыткалать. Тепĕр чух вăл шÿт туса та кулатать. Çавăнпа та ăна матроссем хăйсен тăван ашшĕне юратнă пекех юратаççĕ. Анчах та Ушаков ĕç вăхăтĕнче, çапăçу пынă сехетсенче—чăн-чăн çар пуçĕ: хушнă—ту! Ывăр пулсан те, вилĕм хăрушлăхĕ хăратсан та—ту! Çакă вăл çар йĕрки, çар дисциплини. Паттăррăн çапăçаканни—мухтава тивĕçлĕ, приказа пурнăçламанни — айăпа тивĕçлĕ! Ушаков уйăхла ĕçлеме, кĕрешме пултарайнасть.

Фильмра чуна пырса тивекен, кăмăла çĕклентерсе яракан вырăнсем питĕ нумай.

Акă Ушаков эскадри Корфу утравне штурмлать. Французсем тĕлĕнмелле пехтĕнеççĕ: «Çакăн пек ниçтан тĕвĕнейми çирĕплетнĕ утрав çине ухмах анчах е гениалле çын анчах тапăнма хăять!», тесе кулаççĕ вĕсем. Корфу утравне туртса илни вырăс çар флочĕн историйĕнчи чи чаплă страницăсенчен пĕри пулса тăрать. Чăн та, матроссем арăслан пек çапăçаççĕ, тăшмана çĕнтереççĕ.

Çапăçура вилнĕ матроссене пытарни те чун-чĕрене хытă хумхантарать. Чĕрĕ юлнисем паттăр вилĕмпе вилнисемпе сывпуллашаççĕ. Ушаков хăйĕн матросĕсемпе пĕрле кулянать..

Ирĕке кăларнă утрав çыннисене аслă адмирал çапла калать: «Эпир сирĕнпе пĕр тĕн тытакан çынсем. Пирĕн тăванлăха паттăрсен юнĕпе çирĕплетнĕ. Сире Россия ирĕке кăларчĕ, сире вăл ирĕклĕн пурăнма ирĕк сунать».

Çак сăмахсем пĕтĕмпех вырăнлă пулнă. Вырăссен çарĕпе флочĕ ют çĕрсене ниçхан та хапсăнман, хапсăнмаççĕ те. Вырăссем чурари-пусмăрти халăхсене яланах ирĕке кăларса пынă.

«Карапсем бастионсене штурмлаççĕ» ятлă çĕнĕ кинокартинăна кашни çыннăнах курма тăрăшмалла. Çак фильм уйрăмăнах пирĕн çамрăксемшĕн усăллă.

П. ТРОФИМОВ,
республикăри ДОСААФ оргкомитечĕн председателĕ.

КĔСКЕН

Уява хатĕрленеççĕ. Комсомольски районĕнчи художествăлла пултарулăх коллективĕсем Аслă Октябрь 36 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Культура çуртĕ çумĕнчи драма кружокĕ спектакль лартса пама хатĕрленет, район центрĕнчи вăтам шкулти учительсен хорĕ çĕнĕ юрăсем юрлама вĕренет.

Халăх судьи отчечĕ. Пĕлрес районĕнчи халăх судьи Сенькин юлташ суйлавçăсене тăтăшах отчет туса тарать. Çак кунсенче вăл Туçа ялĕнчи суйлавçăсем патĕнче пулчĕ, унта хăйĕн ĕçĕсем çинчен отчет турĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли пилĕкмĕш государственнăй заем

6-мĕш вылявра выигрышсем тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче Фергана хулинче пулнă.

Таблицăра 100 тенкĕлĕх облигацисем çине выигрышсем тухнине кăтартнă. Выигрыш суммине облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур разрячĕсенчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выигрышсем тухнă:

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
080190	33*)	1.000	090067	1—50	200
080201	38*)	10.000	090289	1—50	200
080400	1—50	200	090298	11*)	1.000
081056	27*)	1.000	090471	19*)	10.000
081117	1—50	500	090490	1—50	200
081140	25*)	1.000	090491	02*)	1.000
081323	44*)	1.000	090643	1—50	200
081600	1—50	200	090790	1—50	500
081730	35*)	5.000	090812	15*)	1.000
081840	12*)	1.000	090876	20*)	1.000
082081	02*)	1.000	090930	32*)	1.000
082090	08*)	1.000	091075	43*)	1.000
082144	1—50	200	091287	1—50	200
082145	11*)	1.000	091375	1—50	200
082216	48*)	1.000	091403	22*)	5.000
082266	38*)	1.000	091812	48*)	1.000
082274	1—50	200	092078	1—50	500
082298	32*)	1.000	092082	27*)	1.000
082442	41*)	1.000	092247	20*)	25.000
082585	1—50	200	092252	45*)	1.000
082657	24*)	1.000	092283	1—50	200
082?82	1—50	200	092491	1—50	200
082945	21*)	1.000	092542	29*)	1.000
083066	12*)	1.000	092665	03*)	5.000
083207	36*)	1.000	092882	08*)	1.000
083630	04*)	5.000	092926	33*)	1.000
083676	29*)	1.000	093138	30*)	1.000
083780	32*)	1.000	093199	1—50	200
083794	1—50	500	093201	1—50	500
083910	32*)	1.000	093233	34*)	1.000
084066	47*)	10.000	093253	1—50	200
084155	36*)	1.000	093358	1—50	200
084190	35*)	1.000	093403	1—50	200
084210	1—50	500	093531	18*)	1.000
084265	26*)	5.000	093539	1—50	200
084662	1—50	200	093572	09*)	5.000
084721	1—50	200	093608	17*)	1.000
084765	39*)	1.000	093665	18*)	1.000
084799	48*)	1.000	093782	16*)	1.000
084800	1—50	200	094137	1—50	200
084834	37*)	1.000	094145	14*)	1.000
085306	37*)	1.000	094250	1—50	200
085505	1—50	200	094326	04*)	1.000
085519	1—50	200	094453	45*)	1.000
085601	50*)	1.000	094590	1—50	200
085847	1—50	500	094595	1—50	500
085922	1—50	500	094640	1—50	500
085968	26*)	10.000	094884	47*)	1.000
086081	24*)	1.000	094899	1—50	200
086084	1—50	500	094900	47*)	1.000
086141	10*)	5.000	095017	1—50	200
086215	06*)	1.000	095309	40*)	1.000
086294	04*)	1.000	095313	1—50	500
086313	35*)	1.000	095343	1—50	500
086359	1—50	500	095344	1—50	200
086416	18*)	1.000	095372	11*)	1.000
086488	1—50	200	095713	15*)	1.000
086583	1—50	200	095765	39*)	1.000
087039	31*)	1.000	095789	08*)	1.000
087046	38*)	1.000	095877	17*)	5.000
087098	1—50	200	095978	48*)	1.000
087132	1—50	500	096174	46*)	1.000
087143	45*)	1.000	096175	01*)	1.000
087224	15*)	1.000	096217	1—50	200
087429	1—50	200	096355	03*)	1.000
087686	15*)	1.000	096860	04*)	1.000
087824	26*)	1.000	096952	1—50	200
087987	1—50	200	097083	1—50	500
087997	46*)	1.000	097270	1—50	200
088145	14*)	1.000	097568	1—50	500
088167	1—50	500	097690	13*)	1.000
088168	1—50	200	097716	1—50	200
088242	11*)	1.000	097725	43*)	1.000
088351	46*)	5.000	097799	03*)	1.000
088417	22*)	1.000	097847	38*)	1.000
088441	01*)	1.000	097852	33*)	1.000
088512	45*)	1.000	097856	33*)	1.000
088785	34*)	1.000	098116	1—50	200
088794	20*)	1.000	098151	25*)	1.000
089104	42*)	1.000	098353	02*)	1.000
089225	1—50	500	098516	12*)	1.000
089255	20*)	1.000	098578	37*)	1.000
089312	1—50	200	098611	17*)	10.000
089360	1—50	200	098748	19*)	1.000
089382	17*)	1.000	099103	09*)	1.000
089489	1—50	500	099131	34*)	1.000
089633	1—50	200	099235	1—50	200
089693	08*)	1.000	099342	13*)	1.000
089719	04*)	1.000	099520	47*)	1.000
089761	14*)	5.000	099676	48*)	1.000
090035	21*)	1.000	099979	1—50	200

*) Çак серири облигацисен ытти 49 номерĕ çине 200-шер тенкĕ выигрыш тухнă.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла та каçхине те вырăсла спектакль «Вей, ветерок».

Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланать.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăнтăрла та каçхине те «Страница жизни» (вырăсла пьеса).

Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхине 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 1-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Корабли штурмуют бастионы» («Адмирал Ушаков», 2-мĕш сери). Сеанссем пуçланаççĕ 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—2-54, промышленность пайĕ—3-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-09, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—2-97, культура пайĕ—2-61, совет строительстви пайĕ—2-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00621

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Заказ № 2478. Тираж 20.000 экз.